Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ОКТЯБЕРĔН 6 КĔÇНЕРНИКУН 281 (5044) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать. ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ. Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, ял хуçалăх пайĕн — 4—97, советсен пайĕн—0—88, промышленноç пайĕн—7—97, ялкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Ял хуçалăх çулне ăнăçуллăн вĕçлессишĕн

Хуçалăх çулне вĕçлекен ĕçлашки тăваттăмĕш квартăла кĕтĕмĕр. Вăйлă тырпулшăн тата ыш-лă вылăх-чĕрлĕхшĕн çулталăкĕпе пынă кĕрешӳ итогĕ чылай йенчен çак квартăлта мĕнле ĕçленинчен килет.

Социалисăмлă ăмăртăва аçлăн сарса, колхоз ĕçĕнче тăрăшса тата тӳрĕ ĕçлесе пырса колхозниксемпе колхозницăсем кăçал, çанталăк килĕшӳлĕ пулмарĕ пулин те, вăйлă тырпул туса илчĕç. Кĕрхи тырăсем йенĕпе гектартан 20-шер центнĕр йе унтан та ытларах пухса кĕртнĕ колхозсем кашни районрах чылай шутланаççĕ. Малта пыракан тата агротехникăлă ĕççене тĕрĕс туса пынă колхозсем çурхи тырăсем йенĕпе те вăйлă тырпул туса илчĕç. Çĕрпӳ районĕнчи „Ĕмĕт" колхоз иртнĕ çул кĕрхи çĕртмене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса хăварса, кăçал гектартан 38,5-шар центнĕр çурхи тулă илнĕ.

Вăйлă тырпул туса илни—колхозсемпе колхозниксен тупăшне ӳстерет. Колхозсенче кăçал ĕçкунĕсем тăрăх укçан валеçмели тупăш та нумай ӳсет. Партипе правительствă кăтартса панă йанăшсене тӳрлетсе, колхозсем кăçал укçан илнĕ пĕтĕм тупăшран 60—70 процент таран ĕçкунĕсем тăрăх валеçеççĕ. Малтан шутласа пăхнă тăрăх Шупашкар районĕнчи Молăтов йачĕпе тăракан колхозра ĕçкунĕ пуçне 8-шар килограм тырă, 4-шар тенкĕ укçан валеçĕнмеле. Ишлей районĕнчи „Парижская Коммуна" колхоз 6-шар килограм тырă тата 3-шер тенкĕ укçан валеçме шутлать. Вăрнар районĕнчи „Пĕрлешӳ" колхозра 7-шер килограм тырă, пĕрер тенкĕ укçан валеçĕнет. Çав май кăçал та чылай колхозниксем темиçе çĕршер пăт тырă, пиншер тенкĕрен ытла укçан илеççĕ.

Çавăн пек результатсем парать çулталăк хушши стахановла ĕçлени. Вал пĕтĕмпех колхозла строй çĕнтерĕвĕ. Çав çĕнтерӳве çирĕплетме халь ĕнтĕ ял хуçалăх çулне ăнăçуллăн вĕçлессишĕн тăрăшни кирлĕ. Тепĕр уйăх ытларахран Социалисăмлă Аслă Октябер революцийĕ пулни 21 çул тултарать. Çав савăнăçлă аслă праçник тĕлне кашнă колхозăн ял хуçалăх ĕçĕсене пурне те пĕтĕмпех вĕçлесе çитермеле,—çапла задачă тăрать халь пĕтĕм парти, совет тата çĕрĕç органĕсем умĕнче.

Малта пыракан предприйатисем Октябер уйавне хатĕрленнĕ май пуçарса йанă социалисăмлă ăмăртăва республикăра чылай колхозсем тата машинă-тракторлă станцисем хутшăнчĕç. Вĕсем Октябер уйавĕ тĕлне ял хуçалăх ĕçĕсене пурне те ăнăçлăн вĕçлесе çитерессишĕн, государствă умĕнче тăракан обйазательствăсене пурне те тултарса çитерессишĕн кĕрешеççĕ.

Анчах та, пайан куна илсен, пур районсенче те, пур колхозсенче те ял хуçалăх ĕçĕсем ăнăçла пулса пыраççĕ теме иккĕпе те пултараймастпăр. Чылай районсемпе колхозсем чылай ĕçсем йенĕпе пит кайа йулса пыраççĕ. Октябĕрĕн 1-мĕшне нихăш район та кĕрхи çĕртме планне тултарса çитереймен. Йĕпреç районĕ 14,5 процент, Трак—18,9 процент, Çĕмĕрле—21,5 процент, Шупашкар—24,7 процент çеç тултарнă. Правительствă панă плана пĕтĕмпех тултарса çитерме пур районсен те чылай ĕçлеме килет.

Авăн çапма кăçал çанталăк пит лайăх тăчĕ. Анчах хăшпĕр районсем ку ĕçре те пит кайа йулса пыраççĕ. Йĕтĕрне районĕнче пĕтĕм тырра çапса пĕтернĕ пулсан, унпа йуващарах Çĕмĕрле районĕнче 30 процент таран тырă çапмасăр йулнă.

Çавăн пекех государствăна тырă тăратас ĕç те вăрăма кайса пырать. Сентябĕрĕн 20-мĕшĕнчен пуçласа 10 кун хушшинче ӳсĕм мĕн пурĕ те 2,7 процент пулса план 94,4 процент çеç пурнăçа кĕнĕ. Колхозсем йенĕпе государствăна тырă тăратмалли плана 97 процент тултарнă пулсан, йединоличниксем йенĕпе 82 процент çеç тултарни хатĕрлев организацийĕсемпе районсенчи парти тата совет работникĕсем йединоличниксене государствă умĕнчи обйазательствăсене тултармасăр хăвармала марри çинчен манса кайса ĕçленине кăтартать. Государствăна ял хуçалăх продукчĕсем тăратас йенĕпе уйрăмăнах Шăхасан (65 процент), Çĕрпӳ (67 процент) тата Хĕрлĕ Чутай (63 процент) районсенчи йединоличниксем йулса пыраççĕ.

МТС ĕçленĕшĕн натурплатă тăратасси татах та çителĕксĕр. Колхозсене тăратнă счетсем тăрăх памалли тырăран 68,7 процент çеç леçнĕ. Йĕлчĕк, Йĕпреç, Çĕрпӳ тата Канаш районĕсем ку ĕçре те кайа йулса пыраççĕ. Çавăн пекех иртнĕ вăхăтсенче государствăран кивçен илнĕ тырра таварса парас ĕç те пачах çителĕксĕр, октябĕрĕн 1-мĕшне 43,5 процент çеç таварса панă.

Республикăра хуçалăхла ĕçсем çавăн пек кайа йулса пыни мĕнле сăлтавсенчен килнине партин облăçри XIX мĕш конференцийĕ уççăн кăтартса пачĕ. Тĕп сăлтав—хуçалăхла задачăсене политикăлă ĕçрен уйрăм тăратнинче, политикă хуçалăхла ĕçрен уйрăм тăмала маррине ăнланманнинче. Ял хуçалăхĕнче пулнă сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтерес тĕлĕшпе пачах çителĕксĕр ĕçлесе пыни, тата çав ĕçе колхозсен йаланхи ĕçĕсемпе пĕрле ял хуçалăх çулне ăнăçуллăн вĕçлессишĕн кĕрешес задачăсемпе çыхăнтарса пымании те çав сăлтав шутне кĕрет.

Партии облăçри конференцийĕ хуçалăхла ĕçсенче кайа йулнине хăварт пĕтерсе малашне çĕнĕ çитĕнӳсем тумалли татăклă майсем кăтартса хăварчĕ: парти тата совет организацийĕсен халь чи малтанах ял хуçалăх ĕçĕсене вĕçлессинче тĕп вырăнта тăракан ĕçсене пурнăçа кĕртсе çитерес тĕлĕшпе хытă ĕçлемеле.

„Ял хуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлесе çитересси республикăри пĕтĕм парторганизацийĕн чи кирлĕ пысăк задачăсенчен пĕри пулнине, çакăнпа пĕрлех, Халăх Комиссарĕсен Совечĕ ял хуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли срукĕсем çинчен йышăннă решенине пурнăçа кĕртменнине палăртса, конференци Çĕрĕç Халăх Комиссариатне, райкомсене, райĕçтăвкомсене, райçĕрĕç пайĕсемпе МТС-сене халех пĕтĕм тракторсене кĕрхи çĕртме сухипе авăн çапас ĕçе йама, колхозсенче çак ĕçсене çитес сывăх кунсенчех туса пĕтерме çителĕклĕ таран туртăм вăйĕ уйăрма хушать" (XIX-ш конференци йышăннă резолюцирен).

Çавăнпа пĕрлех конференци пĕтĕм партипе совет организацийĕсене „çитес кĕске вăхăтрах районсем тата пĕтĕмĕшпе республикă государствăна ял хуçалăх продукчĕсем тăратас ĕçре кайа йулнине пĕтерсе тума хушать, государствă умĕнчи обйазательствăсене пурнăçа кĕртес ĕçре уйрăм йединоличниксем йенчен палăракан государствăна хирĕçле туртăмсене татăклăн пĕтерсе пымала", тесе кăтартса парать.

Политикăлă ĕçсене хуçалăхлă ĕçсемпе тĕрĕс çыхăнтарса, ялта массăлă-политикăла ĕçе вăйлатса Октябер уйавĕ умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пырса, сăтăрла ĕçсен йулашкийĕсене пĕтĕмпех пĕтерме пĕтĕм массăна мобилизацилесе ĕçленипе çеç çав задачăсене ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулать. Парти тата совет организацийĕсен руководителĕсен çав ĕçсене организацилемеле, вĕсен ĕçĕ ял хуçалăх çулĕ мĕнле вĕçленнипе хакланассине малтанах пĕлсе тăмала.

Кĕраки тата кĕрхи çĕртме

Сентябĕрĕн 30-мĕш тĕлне Союзĕпе 31.037 пин гектар çинче кĕрхи тырăсем акса хăварнă—плана 86 процент тултарнă.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç начар пырать. Сентябĕрĕн 30-мĕш тĕлне çĕртмыври колхозсемпе совхозсем 16.014 пин гектар çинче кĕрхи çĕртме тунă—плана 28 процент тултарнă.

(ТАСС).

„Родина" самолетăн пĕтĕм екипажне тупнă

Октябĕрĕн 4-мĕшĕнче Мускав вăхăчĕпе 1 сехет те 05 минутра „Родина" ларакан вырăн патне кайма икĕ самолет вĕçсе тухнă: пĕр самолетне граждăнла сывлăш флочĕн летчикĕ Сахăрăв йулташ тытса пынă, теприне—комдив Сорокин йулташ.

2 сехет те 52 минутра самолетсем „Родина" тĕлне вĕçсе çитнĕ. Парашутсемпе усă курса летчицăсене апат çимĕç, çавăн пекех тата ăшă тумтир, вĕсен самолечĕ хăш вырăнта ларнине паллă туса кăтартнă карттă пăрахса панă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах тата вымпел пăрахнă, ун çинче сигналсемпе каламалли паллăсем кăтартса панă. Çав паллăсемпе усă курса, „Родина" екипажĕ самолет патĕнче Гризодубăвăпа Осипенко тăни çинчен пĕлтернĕ.

Çав паллăсем пулăшнипех „Родина" пилочĕсем разведкă самолечĕсене Раскова çинчен пĕлтернĕ: штурман Раскова самолет ларас умĕн парашутпа сиксе çĕре аннă пулнă. Вĕсем Раскова хăш йеннерех пулмалине стрелкăпа кăтартса панă.

4 сехет те 06 минутра Сахăрăвпа Сорокин йулташсен самолечĕсем Комсомольска вĕçсе таврăннă. Вĕсем анса ларнă хыççăнах Расковăна шырама кайма тата „Родина" ларакан района сывлăш десанчĕ антарса хăварма пĕр ушкăн самолетсем хатĕрлеме пуçланă.

8 сехет те 10 минутра 6 самолет сывлăша вĕçсе çĕкленнĕ. Тепĕр 55 минутран вĕсем „Родина" ларакан вырăн тĕлне вĕçсе çитнĕ. „Родина" екипажне шурлăхлă сывлă вырăнсем урлă каçмали хатĕрсем, пăшалсем тата апат çимĕç пăрахса панă хыççăн, самолетсенчен нумайĕшĕ екипажăн виççĕмĕш членне М. Расковăна шырама кайнă. 9 сехет те 30 минутра Деркунский летчик тытса пыракан самолет Раскова йулташа „Родина" патĕнчен 10 километра йахăнри çетре, сайра йăвăçлă, шурлăхлă вăрманта тупнă. Раскова йулташ тутăрпа сулса тата йатарласах вут купи çунтарса самолета сигналсем панă. Самолет çинчен ăна апат-çимĕç пăрахса панă.

10 сехетре „Родина" ларакан вырăн патне икĕ парашутис—аслă лейтенант Йеремин тата капитан Полежайĕв анна. Гризодубăвăпа Осипенко йулташсем парашутиссене хараслăн саламланă.

Правительствă Комиççийĕ икĕ опытлă парашутис хатĕрлеме, вара октябĕрĕн 5-мĕшĕнче ирхине вĕсене самолет çинчен Раскова патне антарса хăварма распорйажени панă. Парашутиссем хăйсемпе пĕрле компас, хĕçпăшал тата кирлĕ чухлĕ апат-çимĕç илеççĕ. Кирлĕ пулсан вĕсене резинă кимĕ тата йĕлтĕрсем пăрахса пара ççĕ.

План тăрăх Гризодубăва, Осипенко тата Раскова йулташсем парашутиссемпе пĕрле Амгунь йуханшывĕ патне тухмала. Унтан вĕсем резинă кимĕсемпе Анатри Каменкă патне ишсе çитмеле, çав вăхăт тĕлне унта катерсем пырса çитсе сынсене пурне те Кербине илсе çитереççĕ. Кербире „Родина" екипажне тата парашутиссене самолетсем çине лартса малтан Комсомольска, унтан вара Хабаровска илсе кайаççĕ.

* * *

„Родина" анса ларнă район йĕритаврăшпе темиçе çĕр километр сарлакĕш вĕçĕ-хĕррисĕр тайга, тӳрем вырăнсем, сопкăсем, шутсăр нумай кӳлĕсемпе шурлăхсем сарăлса выртаççĕ.

Самолет ларнă вырăн—пысăках мар территори. Вăл—вăрмансăр, питĕ шурлăхланса кайнă, нумай вакă кӳлĕсемлĕ тӳрем вырăн.

Октябер уйăхĕнче вăл вырăнсенче çанталăк калама çук начар пулать. Унта уйар, хĕвеллĕ кунсенче те 12—1 сехетчен çăра тĕтре тытăнса тăрать, тĕтре вăхăтĕнче 50 метртан иçе нимĕн те курма пулмасть. Йаланхи çанталăк тĕтрелĕ пулать, пĕлĕтсем айалта, 150—200 метр çӳлĕшĕнче, хăш чухне унтан та айаларах пулаççĕ.

Çак кунсенче пĕтĕм тĕнчешĕн паллă пулса тăнă Кербри посолăкĕ вăл—Амгунь йуханшывĕ çинчи пысăк мар порт. Амгунь Амура йухса тухать. Керби йĕритаврашĕнче ылтăн кăларакан темиçе вырăн пур. Амгунь тăрăх Амур çинчи Николайĕвскран ылтăн кăларакан вырăнсем патне пысăк мар пăрахутсем пыраççĕ.

(ТАСС).

Деркунский летчик каласа пани

Граждăнла сывлăш флочĕн летчикĕ Деркунский йулташ, М Расковăна шыраса тупаканĕ, Амур çинчи Комсомольск хулинчен тӳрех Мускавпа çыхăнса çапла пĕлтернĕ:

— Раскова йулташа епĕ айалтан вĕçсе куртăм. Вăл чăнах та Раскова иккенне епĕ унăн тумтирĕнчен палласа илтĕм. Çавăн пекех унăн пуçĕнчи авиаци шлемне те питĕ лайăх куртăм. Раскова йулташ тутăрпа сулласа хăй парашутпа анни çинчен пĕлтерчĕ мана.

Çакăн хыççăн епĕ Раскова йулташа апат çимĕç пăрахса патăм тата „Родина" самолет патне пыма çул кăтартрăм. Вăра вăл часах çурçĕр хĕвеланăç йеннеле утма тытăнчĕ. Звено командирĕ Романăв йулташ вăл ăçтала кайнине сăнаса пычĕ. М. Раскова йулташа çав вырăнтан самолет патне хăвăрт илсе тухма, ун патне икĕ парашутис пăрахса пулăшмала пулать.

(ТАСС).

Францири депутатсен палатин ларăвĕнче

ПАРИЖ, октябĕрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Правительствă декларацине вуласа панă хыççăн тата парламентăн çар ĕçĕсен комиççин председателĕ Маелле тата депутат Шишри тухса каланă хыççăн, Даладйе правительствăна шанни-шанманни çинчен ыйту лартнă.

Сасăлас ыйтупа прениле тухса каланă коммунисла депутат Габриель Пери—коммунистсем правительствăна шанни çинчен калакан резолюцине хирĕç сасăлĕç, тенĕ. Чехословакине Гитлĕра сутни çине кăтартса, Пери Германи фашисăмне Балкансене çул уçса паракан Мюнхенри килĕшĕве хирĕç протесленĕ.

Çакăн хыççăн ытти оратăрсем тухса каланă, вăл шутран: Марен, Фроссар, Анри де Кериллис, Блюм тата ыт. Анри де Керилис Мюнхенри килĕшĕве, вăл „Францине питĕ пысăк хака ӳкнине" кăтартса хытă критикленĕ. Социалиссен лидĕрĕ Блюм хăйĕн сăмахĕнче социалиссем правительствăна шанни çинчен калакан резолюцишĕн сасăласси çинчен каланă.

Сасăланă хыççăн, правительствă майлă пулса 535 сын, хирĕç—75 сын сасăланă.

Перерыв хыççăн каçхи ларура, правительствă ăна економикăлă тата финанслă ĕçсенче чрезвычайлă полномочисем пама ыйтнине сӳтсе-йаваççĕ.

Ĕç нацилĕ совечĕ пĕлтерни

ЛОНДĂН, октябĕрĕн 4-мĕш. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕç нацилĕ совечĕ (тред-йунионсен, лейбористла партин ĕçтăвакан комитечĕпе парламентри фракцин Пĕрлешӳлĕ Совечĕ) пайан пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă. Унта çапла каланă: Чехословаки территорийĕсене татса уйăрса илес ĕçе тума, вăл территорисене Германи хĕçпăшаллă вăйсем кĕрсе йышăнмалла ĕçе туни хăйсен килĕшĕвне панă правительствăсем Чехословаки халăхне çыратусенчен, ăна хирĕç тăвакан халăхсем тăвакан хатĕрлеме тивĕç, тенĕ. Германире арĕсленĕ Чехословаки граждăнĕсене кĕске вăхăтрах ирĕке кăларма ыйтать ĕç нацилĕ совечĕ. Ĕç нацилĕ совечĕ Чехословаки халăхне пулăшу памалли фонда укçа-тенкĕ хума пĕтĕм Англи халăхне чĕнсе каланă.

Чехословакири лару-тăру

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Чехословаки республикĕн президенчĕ Бенеш Чехословакири мĕнпур халăхсене чĕнсе радио тăрăх сăмах калать. (Союзфото).

Германи çарĕсем оккупаци тума йураман территоринчи пункта йышăннă

Англи пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германи çарĕсем Крумау йатлă йала (кăнтăр Богеми) йышăннă. Вăл йал Чехословаки территоринче шутланса тăрать, унта Германи çарĕсене хĕçпăшалпа пырса кĕме палăртман пулнă. Германи салтакĕсем ĕвентернĕ тăрăх, Чехословаки çарĕсем çав йал çине танка хирĕç пемели тупăсенчен пенĕ пулать. Пĕтĕм тĕнчери комиççи Германи çарĕсен ĕçĕсемпе килĕшнĕ.

(ТАСС).

Польшă çарĕсем Чехословаки территорине йышăнаççĕ

Польшă Венгрин требованийĕсемпе килĕшет

Польшă çарĕсем Чехословакин Тешин тата Фриштат районĕсене йышăнассине халĕ те туса пыраççĕ. Октябĕрĕн 3-мĕшĕнче Польшă çарĕсем Чески-Тешинран кăнтăр йенче Ропице йатлă хулана, хĕвеланăçĕнче—Черлицкона тата çурçĕрте—Ольбрахцице хулисене йышăннă.

Оккупантсем пырса йышăнман районсенче Польшă фашисĕсем провокацилĕ майсемпе Чехословаки полицийĕпе тытăçусем туса иртереççĕ. Быстшице патĕнче Чехословаки полицийĕн, чехсемпе вĕсен пурлăхĕсене хӳтлесе тăракан скерĕн, ирĕксĕрех хăйсене хӳтлеме майпа Польшăн урса кайнă фашисĕсене хирĕç тупăсенчен пеме тивнĕ.

Польшă правительстви пĕтĕм пичечĕ Чехословакине малашне те таткаласа ваклас шутпа сарлака кампани туса пырать. Венгрин требованийĕсене çийĕнчех пурнăçа кĕртме ыйтса, Польшăн йут çĕршыв ĕçĕсен министерствин хаçачĕ —„Экспресс Поранны" „Венгри çĕресене Чехословакирен уйăрса илесси Венгри хăй тăр пĕччен Чехословакине çĕмĕрсе тăкма вăй çитерейменнишĕн тăма пултараймасть,—тесе çырать.

(ТАСС).

Генлейнăвĕçсен провокацийĕсем

Октябĕрĕн 3-мĕшĕнче Шоничак хулинче (кăнтăр-хĕвеланăç Чехи) вырăнти генлейнăвĕçсем жандармсен постне хĕçпăшалсемпе тапăннă, ултă жандарма хĕçпăшалсăрлатнă, телефон тата телеграф проводисене татса таннă, чылай складсене çĕмĕрсе пĕтернĕ. Çитес сывăх кунсенче ку район Германине куçать. Генлейнăвĕçсем çавăн пек тапăну тунипе çар складĕсене тата унти запассене Чехословакин шалтарахри вырăнсене куçарса кайассине чăрмантарма хăтланнă. Анчах вырăна жандармери отрйачĕ пырса çитсен вăл районта каллех йĕркелĕх кӳнĕ.

Октябĕрĕн 2-мĕшĕнче çирĕме йахăн генлейнăвĕçсем Трутновран çурçĕрелле рабочисем пурăнакан Жацлерге йатлă квартал çине атакăланă. Генлейнăвĕçсем пулеметсенчен, винтовкăсенчен тата револьверсенчен хыттăн пенĕ. Анчах Чехословаки çарĕсем çине тăрса хирĕçленипе вĕсен кайала чакмала пулнă. Хирĕ-хирĕç персе тăрасси виçĕ сехете йахăн пынă.

(ТАСС).

Чехословаки правительствин çĕнĕ составĕ

ПРАГĂ, октябĕрĕн 5-мĕш. (ТАСС) Министрсен çĕнĕ кабинетне çак составпа туса хунă: премйер, вăлах çар министрĕ Сыровы генерал; çулйĕр, почтă тата телеграф ĕçĕсен министрĕ Гайдаш генерал (словак); шалти ĕçсен министрĕ Черны (малтан аграрий, пулнăскер); йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хвалковский (Чехословакин Римри посланникĕ, аграрий); общественнăй ĕçсен министрĕ Гусарек генерал (партире тăманскер; çĕрĕç министрĕ Файерабенд (аграрий, ял хуçалăх кооперацийĕн руководителĕ); финанс министрĕ Кольфус (партире тăманскер); йустици министрĕ Файноф (партире тăманскер, словак); сутĕç министрĕ Буковский (нацилĕ демократ, словак); сутуилӳ министрĕ Карваш (словак, Словаки автономисĕсен партийĕпе çывăх тăракан скер); социальни обеспеченипе сывлăха сыхлав министрĕ Зенкл (чехсем социалист, Прагă хулин пуçлăхĕ); Словаки ĕçĕсен министрĕ Сокол (словаки автономисĕсен партийĕн секретарĕ).

Словаки ĕçĕсен министерствине Словаки автономисĕсен партийĕпе компромисла килĕшӳ тунă пирки çĕнĕрен тунă.

Генерал Гамелен Ельзаса пырса çитнĕ

ПАРИЖ, октябĕрĕн 4 мĕш. „Пари суар" çапла пĕлтерет: генерал Гамелен, Францин наци оборонин начальникĕ, инспекцилĕ ĕçсем тăвас шутпа Ельзаса пырса çитнĕ.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тăшмансемпе çыхăнса кайнă Оçипăва тăрă шыв çине кăлармала

Партин Чăваш облăç организацийĕ ПСК(б)П Тĕпкомĕн февраль-мартри (1937 ç.) историлĕ Пленумĕн решенисемпе тата Сталин йулташăн кăтартăвĕсемпе хĕçпăшалланса, пĕтĕм партипе пĕрле троцкиссене, бухаринĕçсене, буржуаллă националиссене тата халăхăн ытти тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас, вĕсен сăтарла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса иртернĕ. Анчах парторганизацине халăх тăшманĕсенчен тата вĕсене хӳтлесе таракансенчен тасатас тĕлĕшпе нумай ĕçлемеле-ха. Кăна тăшмансене хӳтлесе пурăнакан йăпăлти Оçипăв ĕçĕ те лайăх кăтартса парать.

Г. О. Оçипăв чылай вăхăт хушши ПСК(б)П Обком бюро членĕ тата Чăваш Тĕпеçтăвком президиумĕн членĕ пулса ĕçлесе, халăх тăшманĕсене йăпăлтатса йураса пурăннă. Вăл вĕсен тăшманла ĕçĕсене пĕлнĕ пулсан та, вĕсене тăрă шыв çине кăларма тăрăшман. Чăваш парторганизаци халăх тăшманĕсемпе кĕрешсе пынă вăхăтра вăл нимĕн шарламасăр ларнă. Вăл халăх тăшманĕсене пур майсемпе те витсе тăма тăрăшнă. Чăваш Профсовет председателĕ пулса ĕçленĕ вăхăтра Оçипăв пур пухусенче те Ç. П. Петрова вĕçĕмсĕр ырланă.

1931—34 çулсенче Петрова орден парас пирки пĕтĕм профсойуз членĕсене мобилизацилеме ыйтса пур профорганизацисене те телеграммăсем йанă. Хăй районсенче Петрова орден памала тесе пухусем, митингсем туса çӳренĕ.

Алла ал çăвать, тенĕ ваттисем. Кунта та çапла. ПСК(б)П Обкомĕн çекретарĕ пулса ĕçленĕ Петров хӳттипе Оçипăв Осоавиахим Тĕп Совет председательне шăвăнса кĕнĕ. Петров предател пулнине палăртнă хыççăн Оçипăв пухусенче: „Епе ПСК(б)П Обком бюро членĕ пулнипе килĕшмен, бюро членĕнче те ирĕксĕрех тăнă, бюрора ман сăмаха итлемен, епĕ унта выран çеç йышăнса ларнă. Çавăнпа Петров мана темиçе уйăх хушши ĕçсĕр çӳретрĕ“, тесе суйса, айăпа хăйĕн çинчен сирме пăхнă. Хăй Иванов двурушник тавра йăпăлтатса авкаланса çӳренĕ. Ăна йурас тесе вим укçасăрах Осоавиахим костюмĕ леçсе панă. Вара Иванов та: „Оçипăв хамăр çын, ăна сыхламала пирĕн“, тенĕ. Йăпăлти Оçипăв Спасăв, Матвейĕв, тата ытти тăшмансене вальли уйрам ĕçкĕлĕ банкет туса иртернĕ.

Мĕнле ĕçлесе пынă-ха Оçипăв Осоавиахим Тĕп Советĕнче? Тăшмансен сăтарла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес, Осоавиахим Тĕп Совечĕн ĕçĕсене урăхлатса çĕнетес выранне, Оçипав пур майсемпе те оборонă ĕçне йăпăхтарнă. Вăл чи малтан кадрсене аркатма тытăннă. Вăл Осоавиахим работникĕсем хушшинче партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелесе йарас выранне, хăйне страхлас май, склокă пуçарса йанă. Осоавиахим çумĕнчи парторганизацинче икĕ уйăх хушшинче 8 коммуниса выгăвăр панă. Ĕç дисциплинине йăпăхтарнă. Паллах, çакăн хыççăн Осоавиахимра ĕçсем малала кайман. Осоавиахим билечĕсене улăштарас плана 60 процент кăна пурнăçа кĕртнĕ. Член укçи пухас ĕç те начар. пырать. Çиелтен пăхсан октăберĕн 1-мĕшне 42 процент пухнă пек курăнать. Тĕрĕссипе илсен 17 процент çеç пухнă. Кунта член укçи пухас ĕçре çăмăл çул çине тăнă. Член укçине Осоавиахим членĕсенчен мар, Осоавиахимăн районри совечĕсенчен, районра мĕн чул член пуррине шута илмесĕр, тытса йулаççĕ. Çавăн пирки Осоавиахимăн районри совечĕсенче ĕçлекенсене ĕç укçи вăхатра парса пымаççĕ.

Оçипăв массăсенчен уйăрălса кайнă. Районсене тухса пулăшман, Çĕрпӳ лагĕрĕнчи тăшманла ĕçсене вахăтра тăрă шыв çине кăларман. Осоавиахим Совечĕн пленумĕ пулманни 9 уйăх ытла иртнĕ ĕнтĕ. Çавăн пекех канашлусем те иртнĕ çултанпа пулман. 1937 çулти апрел уйăхĕнче Оçипăв республикăри профактив канашлуне иртернĕ. Ку канашлура Улатăр районĕнчен килнĕ Кашин троцкиса трибунă панă. Анчах ку ĕç тухайман, канашлу Кашин троцкиса тăрă шыв çине кăларнă.

Оçипăв Чăваш Профсоветра та, Осоавиахим Тĕп Советĕнче те самокритикăна путарса пынă. Унăн ĕçне критиклекенсене хăйĕн кабинетне чĕнтерсе вăрçнă. Вăл Осоавиахим хула совег председательне Киселĕв, Аероклуб начальникне Смирнов йулташсене унăн ĕçне критикленĕшĕн хăйĕн кабинетне чĕнтерсе ĕçрен кăларассипе хăратнă. Андриянăв йулташа та, ун çинчен стена хаçатенче заметкă çырса кăларнăшăн, хытă йатланă. Кун пек фактсене темиçе те кăтартма пулать.

Парторгăнсене суйланă вăхатра Оçипăва Трак районне Обком представителĕ туса йанă. Районри коммунисем Майринăн тăшманла ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма тăнине хирĕç пырса, Оçипăв самокритикăна путарма тăрăшнă, Майрин тăшмана пур майсемпе те хӳтленĕ. Оçипăв Çĕрпӳре те Никитинпа та тата Йурăев тăшманпа пĕрле ĕçлесе пурăннă. Вĕсем пулăшнипе вăл Чăваш Профсовет председательне кĕрсе ларнă. Оçипăв 1929 çулта хăйĕн лашине тата йалхуçалăх инвентарĕсене сутса колхоза кĕнĕ. Пĕр сăмахпа каласан, Оçипăв нихăçан та большевик пулман, вăл икĕпитлĕ çын, ултавпа çеç партире тăма пултарнă.

Осоавиахим Совечĕ çумĕнчи пуçламĕш парторганизацин парторгĕсем çак сăтăрла ĕçсене пĕлсе тăнă çĕртех Оçипăва хӳтлесе пурăннă. Мĕншĕн тесен кунта малтанхи вăхăтра Льуминарский парторг пулнă. Ун хыççăн Йермаков тăшман сĕннипе Рйабчикăва парторга суйланă. Рйабчикăв Иермаковăн чи çывăх тусĕ пулнă. Весем ыйтусене пĕрле сӳтсе-йавнă. Йермаков ăна пур çĕрте те ырланă. Ахальтен мар ĕнтĕ Рйабчикăв Йермаковпа Льуминарскине ĕçрен кăларнă хыççăн районри советсенчи Осоавиахим работникĕсен 10 кунлăх курсне иртерме йанă. Вĕсемпе пĕрле ĕçсе çинĕ. Йермаков тăшман çинчен парти пухăвĕнче сӳтсе-йавнă протокола „çухатнă“. Çавăн пекех ытти партдокументсене çухатса парти хуçалăхне йурийех йăпăхтарса йанă. Рйабчикăв Оçипăва самокритикăна хĕсме пулăшнă. Партилĕ-политикăлă тата производствă ĕçне йăпăхтарса йанă, коммунистсене вăрçса, йатласа пĕтернĕ. Тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкийĕсемпе кĕрешмен. Çавăнпа та пулас, Оçипăв Рйабчикăва 800 тенкĕ укçа тыттарнă.

Рйабчикăва парторгран кăларнă хыççăн, Федотăва суйласа лартнă. Вăл та Оçипавăн ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларма, партилĕ-политикăлă ĕçе йĕркелесе йама тăрăшман. Парторганизаци ӳсмест. 1937—38 çулсенче пĕр çынна çеç парти ретне илнипе лăпланса ларнă. Федотăв йулташа та икĕ хутчен партирен каларнă пулнă, икĕ хутчен парти йĕнĕпе йатланă. Çавах вăл хăйне валли кирлĕ пек урок туман. Вăл хăйĕн çитменлĕхĕсене партирен пытарнă, вăрçу-йатлаçу ăшне путланса ларнă. Халĕ ăна партком çекретарĕнчен кăларса пĕр çуллăха парти кандидатне куçарнă. Рйабчикăва партирен кăларса сирпĕтнĕ. Анчах халăх тăшманĕсене хӳтлекен йăпăлти Оçипăв йулашки вăхăтченех Осоавиахим Тĕп Совет председателĕ тата партком членĕ пулса тăрать. Оçипава Осоавиахим Тĕп Советĕнче пĕр минут та тытмала мар. Пирĕн шутпа Оçипăв парти ретĕнче те тăма пултараймасть. Пуçламĕш парторганизацин кĕске вăхăтрах Оçипăвăн партилĕхĕ çинчен сӳтсе-йавса татăклă решени йышăнмала.

П. Перлов.

ПСÇЛКС Тĕпком Пленумĕн решенийĕсене вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. „Алино“ колхозри комсомолĕçсем суйлава хатĕрленнĕ май комсомол оргăнĕсене суйламали инструкципе тĕплĕн паллашрĕç. Халь вĕсем ПСÇЛКС Тĕпкомĕн VI мĕш Пленумĕ „Комсомола çĕнĕрен кĕнисемпе ĕçлесси çинчен“ тата „Комсомолăн йалти ĕçне лайăхлатасси çинчен“ йышăннă решенисене вĕренеççĕ.

ПСК(б)П историне вĕренме хатĕрленетпĕр

ИШЛЕЙ. (Телефон тăрăх). ПСК(б)П историн Кĕске курсне тарăнăн вĕренме хатĕрленес ыйтăва районри парторгсемпе вĕсен заместителĕсен канашлăвĕнче тата пĕччен коммунистсен пухăвĕнче сӳтсе-йаврăмăр. ПСК(б)П историне вĕренекен кружоксене йĕртсе пыма пропагандиссем уйăрса парти райком ларăвĕнче çирĕплетвĕ. Пропагандиссем хушшинче райком çекретарĕсем те пур.

Коммунистсем, комсомолĕçсем тата учителĕсем хушшинче ПСК(б)П историне вĕрентекен пропагандиссене уйрăмăн пухса çеминарсем туса иртернĕ. Çеминарсенче парткабинет пуçлăхĕ Долгов йулташ активлă ĕçлет.

Парткабинетра кружоксемпе йĕртсе пыракансемпе кружоксенче вĕренекенсем вальли консультаци организациленĕ. Малтанхи темăсем вальли кирлĕ литературă, альбом тата карттăсем хатĕрлене. Парткабинетра иламлĕ литературă çителĕклĕ мар. Вăл литературăна илме çак кунсенче Шупашкара пĕр çын йама шутлатпăр.

Кашни коммуниса, комсомолĕçа кружоксене çирĕплетес ĕçе туса пĕтернĕ. Хальти вăхăтра коммунистсем ПСК(б)П историн Кĕске курсĕпе малтанлăха паллашаççĕ. Коммунистсем ПСК(б)П историн Кĕске курсне пичетленĕ хаçат номĕрĕсене пуçтарнă, халĕ вĕсемпе усă кураççĕ.

Сазонăв.

ПСК(б)П Ишлей райком çекретарĕ.

Пуху XIX-мĕш партконференци решенисене ырларĕ

ПАТĂРЙЕЛ. Октăберĕн 1-мĕшĕнче „Хĕрлĕ йалав“ колхоз çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференци ĕçĕсем çинчен çӳтсе-йаврĕ. Тухса калакансем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес ĕç пит те тăсăлса пынине палăртрĕç. Вăл ĕçсем колхозра халĕ те пулса пыраççĕ-ха. Çентăберĕн 11-мĕшĕнчен октăберĕн 1-мĕшне çитиччен фермăра 306 пуç сысна вилнĕ. Колхоз правленийĕ тата коммунистсем фермă çине çителĕклĕ çаврăнса пăхман.

Колхоз ытти ĕçсемпе те кайа йулса пырать. Халĕ те 3 гектар кантăр татса пĕтермен, 21 гектар çĕрулмине кăларма тытăнман. Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç кайа йулса пырать.

Ĕçсем начар пулса пыни йалхуçалăх ертелĕн уставне пăснипчен килнĕ. Акă, 5-мĕш бригадă бригадирĕ Плотникăв колхозниксене 7000 ĕçкунĕ çырса паман.

Пуху Чăваш парторганизацин XIX-мĕш конференцин ĕçĕсене ырласа, тăшмансен сăтăрла ĕçсен йулашкисене кĕске вăхăтра пĕтерме пулчĕ.

Н. Квасăв.

Партине кĕме чăрмантарса тăраççĕ

ТУТАРКАС. Активлă комсомолĕç С. Воробйов й. май уйăхĕнчех парти ретне кĕрес тесе райĕçтавком çумĕнчи пуçламĕш организацине зайавлени панă. Вăл зайавленисене парторг Макейĕв й. ку вăхăтченех пухура лартса сӳтсе-йавман. Çавăн пекех, райçĕрĕç пайĕ çумĕнчи пуçламĕш организаци А. Çибаков й. зайавленине майăн 5-мĕшĕнчен варах сӳтсе-йавман. С. Воробйовпа А. Çибаков йулташсем—Хĕрлĕ Çара каймаласкерсем.

Зайавленисене пуçламĕш организацисем пăхса тухасси çине ПСК(б)П райкомĕн инструкторĕ Ф. Иванов йулташ та çителĕклĕ çавăнăнса пăхмасть.

ПСК(б)П Тутаркас райкомĕн парти ретне кĕме панă зайавленисене вăхăтра пăхса тухас ĕçе йĕркелемеле.

И. Ивановă.

Смотрсем пулаççĕ.

Çамрăксен художествăлă пултарулăхне лайăхрах палăртас шутпа, хальхи вăхăтра республикăри районсенче смотрсем пулса иртеççĕ. Çак смотрсем комсомол чăваш обкомĕ тата халăх пултарулăх çурчĕ пуçарнипе ленинла комсомол 20 çул тата Октăбĕр революци 21 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес майпа иртеççĕ. Районри смотрсем хыççăн октăберĕн 27—29-мĕш кунĕсенче, Шупашкарта республикăри смотр пулса иртет.

Республикăри районсене, çамрăксен художествăлă пултарулăх смотрĕсене хатĕрлеме тата вырăнти кружоксене практикăлă тата методикăлă пулăшу пама, Халăх пултарулăх çурчĕн работникĕсем кайнă. Районсенче вĕсем чылай вăхăт хушши пулаççĕ.

Ӳкерчĕк çинче: 6-мĕш номĕрлĕ вăтам шкулта учительница Йакăвлĕвă йулташ 1-мĕш класра заньати иртерет (Шупашкар). Цыганов фото-ӳкерчĕкĕ.

Тĕнчене çĕнетекен теори

Сталинла Тĕп Комитет Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партин историн Кĕске курсне кăларса, парти аллине пысăк вăйлă хĕçпăшал пачĕ, — çак вăйа ĕнтĕ пирĕн актив, пирĕн интеллигенци пур йĕнчен те тулликрех, пур йĕнчен те уççăнрах туйанать. Ку таранччен пулнă пархатарсăр учебниксемпе хрестоматисен авторĕсем большевикла партин историне хăйсене майлă, хăш чухне тата тĕрĕс мар çутатса панă, вулакансен пуçĕнче нимĕнле ăнланса йулмала мар хаос туса хăварнă. Халĕ ĕнтĕ çак йĕркесĕрлĕхе пĕтернĕ, пысăк аслăлăхлă, авторитетпа çирĕплетнĕ, ПСК(б)П Тĕп Комитечĕ сĕнсе панă пĕр учебник тунă, вăл пирĕн кашни активиса Ленин—Сталин аслă партин историне пĕлнипе, етем йăхĕн малта пыракан теори, марксисăм-ленинисăм теорин ӳнкĕсĕне хĕçпăшаллантарать.

Тĕнчене çĕнетес ĕçре çак теорин пахалăхне, хăватне чăнахах та хаклама йал та çитес çук. Идейăсен вăйĕпе тĕрĕслĕхне истори тĕрĕслет. Марксисăм-ленинисăм теорине истори нумай çулĕсем хушшинче ĕçсем тĕрĕсленĕ, вăл çак тĕрĕслӳ витĕр чаплăн тухрĕ, хăйĕн хăватне кăтартрĕ. „Коммунисла манифестран“ пуçласа, — ăна Сталин марксисăмăн „йуррисен йурри тесе пăхаланă,—пирĕн çамрăкри Сталинла Конституци çĕнтерӳвĕн кунĕсене çитиччен—пирĕн аслă теори темиçе вунă çулсем хушшинчи нумай çапăçусенче ӳссе, тĕреклене, çĕнтерсе малала пынă, вăл тĕнчене коммунисăм никĕсĕ çинче çĕнетет.

Марксисăм теорине аталантарса, пуйанлатса пынине кăтартакан тĕслĕх вăл—В. И. Ленин çырнă классикла философиле ĕç — „Материалисăм тата емпириокритицисăм“ пулать, ăна çырнăранпа пайан вăтăр çул тултарать. Ленинăн çакă чаплă ĕçĕ большевикла партине, çĕнĕ йышши партине теори йĕнчен хатĕрлени пулнă.

Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партин историйĕ марксисла-ленинла теорин вăйĕпе хăватне большевиксен историлĕ кĕрешĕвĕпе çĕнтерĕвĕнчи фактсем тăрăх кăтартса парать. Теорисĕр, общество аталанăвĕн саккунĕсене пĕлмесĕр, çак саккунсене ăнланмасăр, вĕсене аталантарса пымасăр, çĕнĕрен те çĕнĕ саккунсем уçса пымасăр парти йĕртсе пыма пултараймасть, унсăрăн унăн тĕттĕм çĕрте аташса çӳремеле пулать.

Пирĕн парти темиçе вуншар çулсем хушши рабочи класăн пуçĕнче тăнă, халĕ те тăрать, вăл социализмăн нумай йышлă тăшманĕсене хирĕç хаярран кĕрешсе, рабочи класпа пĕтĕм халăха хăйулăн пролетарилĕ революцин çĕнтерӳвĕ патне, çĕр чăмăрĕн ултăмĕш пайĕнче социализм çĕнтересси патне илсе пычĕ. Парти çакăн пек шанчăклă пулни, вăл рабочи класпа пĕтĕм халăха йертсе пыни тĕрĕс пулни—истори пыракан çула пĕлсе тăни çинче, общество аталанăвĕн саккунĕсене пĕлсе тăни çинче никĕсленсе тăрать, — малашлăха пĕлсе тăмали хĕçпăшал, çăрвуççи вăл — марксисла ленинла теори. Пирĕн парти социализмăн пур тăшманĕсене çĕнтернĕ, çĕнтерет, малашне те çĕнтерĕ, мĕншĕн тесен унăн аллинче марксисла-ленинла теори пур, вăл—кĕрешӳпе ĕçсен руководстви, мĕншĕн тесен вăл марксисла теорине коммунисăмшăн кĕрешсе вăрмайăх çĕнĕ опытсемпе пуйанлатса, пĕрмайăх малала та малала йама вĕренсе çитнĕ.

Марксисла-ленинла теори—тĕнчене çĕнетекен вăй. Çак вăйа, обществă идейĕсен пахалăхне шăлса лартма, пĕчĕклетме тăрăшнă марксисăма хирĕç ыракан нумай йышлă ушкăнсемпе ушкăн пеккисем, вĕсем марксисăма пăсса пĕтерĕç, диалектикăлă материалисăмпа историлĕ материалисăма вульгарлă економикăлă материалисăмпа улăштарма тăрăшнă, историне економикăлă саккунсем хăй тĕллĕн малала пыни пулать тесе вĕрентнĕ, обществăна çĕнетес ĕçре идейăсемпе теорисен вăйне йышăнмин. Марксисăма çакнашкал вульгаризацилени мĕн йулашки вăхăтсене çитиччене чылай кружоксенче пулнă. Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партин историйĕ марксисăма вульгаризацилекенсене пурне те ытлăн çапса ӳкерет. ПСК(б)П истори идейĕсен аслă вăйне, теорин аслă вăйне тата тепĕр хут çĕнĕрен кăтартать. Çак вăй тĕреклентĕр, нумайлантăр тесе, Ленин—Сталин партийĕ советăн кашни активлă деятельне, совет интеллигенци кадрне марксисăм-ленинисăм теорийĕпе хĕçпăшаллама, ăна догмă выранне хурса мар, ĕç йĕнчен илсе вĕренме, ăна малала йама чĕнет.

Теорине çĕнсе илесси ытла та йăвăр ĕç, пирĕн кадрсемшĕн йăвăр ĕç тесе шутлани тĕрĕс мар. Большевиксем çĕнсе илме пултараймин крепăçсем çук. Пур йышши пур пек крепăçсене çĕнсе илмели çăрăуççи вăл — марксисла-ленинла теори. Çак уççа алла илес тесен, парти активисĕн, совет интеллигенчĕн çак тĕллеве хăй умне кăйдăн лартас пулать, çак тĕллев патне çитме çинерех тăрас пулать, характĕре хытă тыткалас пулать.

Чăнахах та, хăçан, ăçта малта тăракан теорипе хĕçпăшалланма хальхи вăхăтра пирĕн çĕршыври пек, социалисăм çĕнтернĕ çĕршыври пек лайăх условисем пулнă! Хăй умне çакăн пек хисеплĕ задач—ПСК(б)П историн курсне вĕренес задачă лартнă кашни йулташ валлийех марксисăм-ленинисăм классикĕсен ĕçĕсем пур. Марксисла-ленинла теорине чăннипех çĕнсе илес тесен, ПСК(б)П историне вĕренмеле, Маркс, Енгĕльс, Ленин, Сталин çырнисене вĕренмеле, Карл Маркс çырнă „Капитала“ вĕренмеле, — кунта вара Ленинпа Сталинчченхи тапхăрта марксисăм тĕп ыйтусем тăрăх кăтартса панисем пурте пур.

Марксисла-ленинла теорине тĕплĕн, тарăнăн, пултарулăн вĕренес пулать, догмă выранне хурса мар, ĕçпе кĕрешӳ руководстви выранне хурса вĕренес пулать. Çавăн пек вĕрени анчах нумайа пырать, çавăн пек вĕрени анчах ăнланса йулма пулăшать.

„... çак теори тĕпĕ-йĕрĕ—çак теорине революцилĕ йухăмăн практикăлă ыйтăвĕсене пролетариатăн клас кĕрешĕвĕн тĕрлĕ условисенче татса панă чухне усă курма вĕренесси пулать те.

Марксисла-ленинла теорине вĕренес тени—çак теорине революцилĕ йухăмăн çĕнĕ опычĕпе пуйанлатма пĕлессине, ăна çĕнĕ положенисемпе, вывăдсемпе пуйанлатма пĕлессине, ăна аталантарса малала йама, теори шухăшĕ тăрăх ун хăш-пĕр кивелнĕ положенисемпе вывăдсене хальхи историлĕ лару-тăрура килĕшулĕн çĕнĕ положенисемпе вывăдсене хуша улăштарасси умĕнче те чарăнса тăмасăр малала йама пĕлесси пулать“. (ПСК(б)П истори. Йулашки кăларăм).

Парти пирĕн кадрсемпе пирĕн совет интеллигенцийĕ умне теорипе хĕçпăшалланас тĕлĕшпе кăларса тăратнă задачăсен тĕп выранĕ çакăнта, тĕп шухăшĕ çакăнта. Мĕншĕн тесен пирĕн кадрсем, совет интеллигенцийĕ Ленинла—Сталинла Тĕп Комитетпа Совет правительстви йертсе пынипе совет государствине тытса тăрас ĕçре чăннипех те питĕ пысăк ĕçсем тăваççĕ.

Социалисăм тĕнчен 1/6 пайĕнче çĕнтерчĕ, анчах тĕнчен 5/6 пайĕ çаплах капиталисăма пăхăнса тăрать-ха. Пирĕн çĕршыв капиталисăм тĕнчи хушшинче пурăнать, капиталисăм социалисăм çĕршывне хирĕç ырми-канми кĕрешет. Капиталисăмлă йĕри-тавралăх умĕнче тытăнса йулас тесен, капиталисăмлă йĕри-тавралăха парăнтарас тесен, пирĕн хамăрăн çĕршыв оборонин хăватне, Совет государствин хăватне тĕреклетес пулать. Государствă управлени кадрĕсен, пирĕн интеллигенцин хăйсен хисеплĕ, пысăк государствă ĕçне кирлĕ пек пурнăçлас тесен, пирĕн патра капиталисăм тĕнчинчен килекен тăшмансен пур йышши ирсĕр ĕçĕсене тупса пĕтерес тесен, обществă аталанăвĕн саккунĕсене лайăх пĕлес пулать.

Çак задачă—кадрсене, интеллигенцине марксисăм-ленинисăм теорийĕпе хĕçпăшаллантарас задачă халĕ пĕтĕм парторганизацисем умĕнче чи кирлĕ, тĕп, ĕçе татса паракан задачă пулса тăрать. Çак задача май парти пропаганди шкулĕсен ĕçне урăхлатса тухас пулать. Хисеплĕх хыççăн кайма, кружоксем, çеминарсем, парткабинетсем ытларах тăвасси хыççăн хăваласа пăрахас пулать, тĕп ĕçе—пропагандă ĕçне лайăхлатма тытăнас пулать. Кружоксем—марксисăма-ленинисăма вĕренес ĕçре пĕртен-пĕр формă мар-ха. Совет интеллигенцийĕнчен нумайăшĕ ПСК(б)П историне, марксисăм-ленинисăм классикĕсен ĕçĕсене хăйсем тĕллĕн вуласа вĕренме пултараççĕ. Çавăн пек вĕренекенсене пулăшни çеç кирлĕ,—ку тĕлĕшпе консультаци ĕçне пичет урлă та, ахаль те вăйлатмала, лайăх пропагандиссене лекцисем тутармала, çавăн пек лекцисене пичетлесе кăлармала.

Ленин—Сталин партийĕ марксисла теорине пĕрмайăх малала йарса пырать. ПСК(б)П пĕтĕм историйĕ çакна вĕрентет:

„... Енгĕльс вилнĕ хыççăн марксисла теорине малала йарса пыракан, пролетариатăн клас кĕрешĕвĕнчи çĕнĕ условисене май ăна çĕнĕ опытсемпе пуйанлатса пыракан пĕртен-пĕр марксиссем—пысăкран та пысăк теоретик Ленин, Ленин хыççăн—Сталин тата Ленинăн ытти вĕренекенĕсем пулнă.

Марксисла теорине Ленинпа ленинçăсем малала йарса пынăран ĕнтĕ ленинисăм марксисăма малала аталантарса пыни, пролетариатăн клас кĕрешĕвĕнчи çĕнĕ условисенчи марксисăм, империалисăм тата пролетарилĕ революцисен тапхăрĕнчи марксисăм, социалисăм тĕнчен улттăмĕш пайĕнче çĕнтернĕ тапхăрти марксисăм пулса тăрать“.

ПСК(б)П историне туса партин Тĕп Комитечĕ, Сталин йулташ партине ăслăлăхлă чаплă çĕнĕ ĕçпе хĕçпăшаллантарчĕ, ку ĕç марксисăм-ленинисăм теорине пуйанлатать. Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕн историйĕ пысăк вăйлă рычак, çак рычакпа парти марксисăм-ленинисăм пропаганди ĕçне нихăçан пулман çӳлĕ выранна çĕклене çĕрте усă курать, вăл çĕнетекен вăйпа мĕнăйуншар совет интеллигенчĕсене хĕçпăшаллантармала тăвать. Çакă вăл пирĕн партине, Совет государствине çĕнĕ, хăватлă вăй парать, çакă вăл пирĕн çĕршывра коммунисăм çĕнтерĕвне хăвăртлатать, капиталисăм ишĕрĕлсе анассине, коммунисăм пĕтĕм тĕнчипех çĕнтерессине хăвăртлатать.

(„Правда“ умстатйин, 1938 ç. октăберĕн 9-мĕш).

Перепис умӗн

Йалсовечӗ перепиçе хӑтӗрленет

Аманик йалсовечӗ (Куславкка р.) йулашки кунсенче Пӗтӗм Союзри халӑх перепиçне хӑтӗрленес тӗлӗшпе вирлӗн ӗçе тытӑнчӗ. Йалсовет членӗсем колхозниксемпе йединоличниксен, çамрӑксен, хӗрарӑмсен пухӑвӗсенче перепиçе мӗнле ирттермели çинчен докладсем туса ӑнлантарчӗç. Стена „хаçачӗ çинче“ перепиçе хатӗрленес ӗç мӗнле пынине çутатаççӗ. Куеемсӗр пуçне клубра перепиç кӗтесӗ организациленӗ. Ку кӗтесре ССРС Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ Пӗтӗм Союзри халӑх перепиçӗ çинчен йышӑннӑ постановленипе перепиç çинчен çырнӑ статйасене пухса çыпаçтарса хунӑ.

Йалсовечӗ пур йенчен те перепиçе кӑтартулӑн ирттерме хатӗрленет. Перепиçре ӗçлеме шанчӑклӑ çынсене уйӑрнӑ. Халӗ йалсоветри счотчиксем перепиçе лайӑх ирттерме пулса пӗр-пӗринпе социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗç.

В. Ваҫушков.

Пулӑшу комиççи организациленӗ

Йанӑшри „Хӗрлӗ Сурӑм“ колхоз (Клӗк р.) 1939 çулти йанвар уйӑхӗнче пулакан Пӗтӗм Союзри халӑх перепиçне хатӗрленет. Çак кунсенче колхозра перепиç вӑхӑтӗнче ӗçлеме 5 çынран пулӑшу комиççи организациленӗ. Счотчиксем пулма шанчӑклӑ, ӗçре тӗрӗсленнӗ çынсене уйӑрнӑ. Перепиçре ӗçлеме уйӑрнӑ çынсем (вӗсем виççӗн) халӗ хуçалӑх кӗнекисене тӗрӗслесе тухрӗç, йалти комсомолӗцсемпе, учительсемпе пӗрле колхозниксемпе йединоличниксене халӑх перепиçӗ çинчен ӑнлантарас ӗçе вӑйлӑлатрӗç.

В. Петров.

Стаханӑвкӑ-трактӑристкӑсем

ВӐРНАР. Вайонри МТ Станцинчи трактӑр бригадисем пурте Октабӗр уйавӗ умӗнхи социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑннӑ. Ӑмӑртура Чӑваш АССР Верховнай Совет депутачӗн Харитонӑвӑ йулташӑн бригади паха тӗслӗхсем кӑтартат. Бригадӑ çумне çирӗплетсе панӑ 3 колхозран икӗ колхозӗнче кӗрхи çӗртме туса пӗтерчӗ. Афанаçйӗвӑ трактористкӑ кулленхи нормӑна 150 процент таран, М. Куçмина трактӑристкӑ 200 процент таран тултарса пыраççӗ.

Ан. Крислов.

Ӑмӑртӑва тухнӑ колхозсенче

ÇӖРПӲ. Аслӑ Октабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑрту колхозсенче анлӑн саралса пырат. Колхоз производствинче кунсеренех çӗнӗрен те çӗнӗ стаханӑвецсем, вӑйлӑ тырпулшӑн кӗрешекен паттӑрсем палӑрса пыраççӗ. Йалсоветсемпе колхозсем Октабӗр уйавне йалхуçалӑх çулне ӑнӑçлӑн ирттернипе, государствӑ умӗнчи парӑмсене татнипе кӗтсе илме тӑрӑшса ӗçлеççӗ. Акӑ Йантушри „Çамрӑк вӑй“ колхоз государствӑ умӗнчи обйазательствӑсене тултарса çитерчӗ, çӗрулмипе сӑс-кантӑр та парса татрӗ. Çакӑн пекех, Шуртавӑшри „Комбайн“ колхоз государствӑна тырӑ тӑратас, машинӑ-тракторлӑ станцине натурплатӑ тӳлессине те пурнӑçа кӗртрӗ.

В. Дмитрийӗв.

Кайа йулнӑ

ИШЛЕЙ. Районра чылай колхозсем авӑн çапса пӗтерчӗç. Пур колхозсенче те пекех, пахча-çимӗçсене те пуçтарса кӗртнӗ. Çав хушӑрах, район центрӗпе йунашар ларакан Мыскаринкасси колхозӗнче халӗ те авӑн çапса пӗтермен. Пахча-çимӗçсене те пуçтарса кӗме тытӑнман. Пайанччченех государствӑна тырӑ парса татман. Ӗçсем кайа йулса пынин сӑлтавӗ пӗтӗмпех колхозра руководствӑ çуккинчен килет. Колхоз председателӗ М. Морозӑв йулташ ответлӑха туйса илмест. Халичченех çуркунне уйа тислӗк кӑлармине, тырӑ вырнине, авӑн çапнине, утӑ çулнӑ çӗрте ӗçленине ӗç кӗнекисем çине çырса пыман. Счетовод пулса ӗçленӗ М. Мешков йулташ: „халӗ епӗ счетоводран тухнӑ“, тесе сӳрет.

Колхозниксем районри çӗрӗç пайӗнчен пулӑшу парасса кӗтеççӗ. Çӗрӗç пайӗн Мыскаринкасси колхозне йалхуçалӑх çулне хӑвӑрт вӗçлемешкӗн кирлӗ пулӑшу памала.

В А Шорин.

Выльӑхсене хӗл каçарма йапӑх хатӗрленеççӗ

Елӗк районӗнчи чылай колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каçарма тивӗçлипе хатӗрлеме тытӑнман. Урмайри „Çуттала“ колхозӑн ӗне ферми валльи кӑçал çӗнӗ вите лартмала пулнӑ, ӑна тума та пуçӑнман.

Йуманлӑх колхозӗнче те выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каçарма начар хатӗрленеççӗ. Выльӑх апачӗ çитмест. Çавӑн пекех Йеренар колхозӗ те фермӑри выльӑхсене хӗл каçарма кирлӗ таран апат хатӗрлемен. Пӗр тоннӑ çилос та хывман.

Колхозсенче выльӑх-чӗрлӗхсене хӗл каçарма йапӑх хатӗрленсе пынине райçӗрӗç пайне паллӑ, анчах ӗçре пулӑшу çук. Зоотехниксем колхозсене вӑхӑтран вӑхӑта çеç пырса тухса кайаççӗ, фермӑсене мӗнле пулӑшу кирлипе интересленмеççӗ.

Ф. Филиппӑв.

Займ укçине ӑнӑçлӑн пухассишӗн

Совет займӗ сарӑлни—Совет Союзӗнчи халӑхсен кӑмӑлне, халӑх социалисӑмлӑ хуçалӑха йалан çирӗплетсе пыма, çӗршыва тӗреклетме, ӑна никам çӗнтерейми вӑйлӑ тума тӑрӑшнине кӑтартат. Пирӗн кашни займ—халӑхӑн мораль-политикӑлӑ пӗрлӗхне, совет патриотисӑмне кӑтартат. Совет займӗсене халӑх пысӑк хаваслӑхпа çырӑнса илет.

Виççӗмӗш Пилӗкçуллӑх (пӗррӗмӗш çулхи кӑларӑм) Займне кӗске вӑхӑтрах çырӑнмали хисепрен 900 мӗлйун тенкӗлӗх йахӑн ирттерсе çырӑннӑ.

Займ колхозлӑ йалсенче пысӑк хисепре шутланат. Колхозниксем, ӗççынни хресченсем займ çырӑнса илме пысӑк кӑмӑл пуррине çеç мар кӑтартрӗç, чылайӑше займ укçине çырӑннӑ чухнех тӳлесе татрӗç. Улатӑр районӗнчи „Свободный труд“ колхозра Николай Васильӗвич Куликов çӗнӗ займа 100 тенкӗлӗх çырӑнса, укçине çавӑнтах тӳлесе татрӗ:

— Пирӗншӗн партипе правительствӑ хытӑ тӑрӑшаççӗ, пире пуйан та культурӑлӑ пурнӑç туса пачӗç. Çавӑнпа епӗ хамӑрӑн государствӑна савӑнсах пулӑшатӑп,—терӗ Куликов йулташ займ çырӑнса илнӗ чухне.

Шӑнкӑртам районӗнчи Палтай йалӗнче Махметӑв колхозник 160 тенкӗлӗх займ çыранса, укçине çав кунах 75 тенкӗ тӳленӗ. Йединоличник Вахитӑв 100 тенкӗлӗх çырӑнса займ укçине çавӑнтах парса татнӑ.

Займ уполномоченнӑйӗ Ильбекӑв Василий (Шӑмӑршӑ р.) „Трийер“ колхозра 1095 тенкӗлӗх сарнӑ. Колхозниксем займшӑн укçа çийӗнчех 750 тенкӗ тӳленӗ.

„Первая борозда“ колхозри (Тутаркас р.) колхозниксем Йапони самурайӗсем Совет çӗршывӗн чикки çине тапӑннине хирӗç ответлесе займ укçине вӑхӑтчен малтан пӗтӗмпех парса татма йышӑннӑ. Августӑн 5-мӗшӗнче çак колхозри колхозниксем пурте займ укçине парса татнӑ.

Тутаркас районӗнче çакӑн пек паха тӗслӗхе ытти колхозсене те куçарса пынӑ. Çавӑнпа ку район III-мӗш кварталта йалсенче займ укçи пухас плана 152,9 процент тултарнӑ. Займ укçине вӑхӑтран малтан парасси халӗ вӑйлансах пырат. Финанс оргӑнӗсем, перекет кассисем, комсодсем, финагентсем тата займ уполномоченнӑйсем чылайӗшӗ хӑйсен умӗнче тӑракан задачӑсене тӗрӗс ӑнланса илсе, çак чаплӑ пуçарӑва—займ укçине вӑхӑтчен малтан тӳлесе татассине вӑйлатса пыраççӗ.

Виççӗмӗш Пилӗкçуллӑх (пӗрремӗш çулхи кӑларӑм) Займ укçине III-мӗш кварталшӑн колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче çак районсем ытлашшипех пухнӑ: Шӑнкӑртам 257,6 процент, Тутаркас 152,9 проц., Йелчӗк 143,2 проц., Кувакинӑ 122 проц., Хӗрлӗ Чутай 140 проц., Тӑвай 120,2 процент тултарнӑ. Елӗк, Трак районӗсем тата Шупашкар хули займ укçи пухассине виççӗмӗш квартал планне тултарасси патне çывхарнӑ.

Финанс оргӑнӗсем вырӑнти перекет кассисене, комсодсене, йалсовет уполномоченнӑйӗсене, финанс агентӗсене оперативлӑ йертсе пынӑ çӗрте, вӗсем активпа, йал общественнӑçӗпе тачӑн çыхӑнса ӗçленӗ çӗрте, социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва лайӑх йӗркеленӗ çӗрте займ укçине пухас ӗç ӑнӑçлӑн пырат. Пур финанс оргӑнӗсем те, пур перекет кассисем те çавӑн пек ӗçлеме пултараççӗ, пултарма тивӗç те.

Анчах финанспа перекет касси сен çиçтеминче çак пысӑк ӗçе политикӑла хак паманнисем, лайӑх опытсене ытти çӗре сарма тӑрӑшманнисем, займ тытакансем хушшинче ӗçлеме ӳркенекенсем çук мар-ха.

Куславкка районӗнче колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче III-мӗш кварталшӑн займ укçи пухассине мӗн пурӗ те 29,6 процент çеç тултарнӑ. Сентабӗр уйӑхӗнче займ укçи пӗррӗмӗш вунӑ кун хушшинче—3 пин тенкӗ, 2-мӗш вунӑ кунра—1 пин тенкӗ, 3-мӗш вунӑ кунра—2 пин тенкӗ кӑна пухнӑ. Çак цифрӑсем Куславкка районӗнчи перекет кассийӗ (пуçлӑхӗ Зайцӗв йулташ) ӗçлеменнине кӑтартаççӗ.

Турхан районӗ (районри перекет кассин пуçлӑхӗ Бельский йулташ) III-мӗш кварталта займ укçи пухас плана пӗтӗмпе 73 процент тултарнӑ, йалсем тӑрӑх мӗн пурӗ те 45,5 процент çеç пухнӑ.

Сӗнтӗрварри районӗ те (перекет кассин пуçлӑхӗ Йефимӑв йулташ) кайа йулса пырат. Йефимӑв йулташ укçа-тенкӗ пухас ыйтусем тӑрӑх 1938 çулта йалсоветсенче пачах та пулман, Аккозинӑри перекет кассинче 1937 ç. сентабӗр уйӑхӗнче çеç пулнӑ.

Йалсенче колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче укçа пухас ӗç Ишлей, Шупашкар, Пӑрачкав тата Йӗпреç районӗсенче те çавӑн пекех йапӑх.

Халӑх тӑшманӗсем, троцкисла-бухаринла бандитсем финанс фронтӗнче те сахал мар сӑтар туса хӑварнӑ. Тӑшмансен сӑтарла ӗçӗсен йулашкийӗсене пӗтерес тӗлӗшпе кӗрешӳ халӗ те çителӗклӗ мар-ха. Финанс ӗçӗнчи тӑшманла етемсене пӗтӗмпех тасатас пулат.

Çакна ӑнланса илме вӑхӑт ӗнте: йулса пыракан участкӑсем йулса пыракан руководительсене пула пулаççӗ. Кирек мӗнле ӗçре те, çавӑн пекех финанс ӗçӗнче те, массӑлӑ ӑнлантару ӗçӗ, социалисӑмлӑ ӑмӑрту пит те пысӑк вырӑнта тӑрат. Октабӗр революцин уйавне хатӗрленнӗ май, йалсенче займ укçине 100 процентӗпех пухса çитерес тӗлӗшпе финанс работникӗсене социалисӑмлӑ ӑмӑртӑва анлӑн хутшӑнтармала.

А. М. Михайлӑв.

Тырӑсене вырса пуçтарни

Союзӑн уйхирӗсенче пучахлӑ тырӑсене вырса пуçтарас ӗç вӗçленсе пырат. Сентабӗрӗн 30-мӗш тӗлне колхозсемпе совхозсем 85 мӗлйун та 667 пин гектар пучахлӑ тырӑсем вырнӑ—плана 98 процент тултарнӑ.

Вырнӑ тырӑран 83 процентне çапнӑ.

(ТАСС).

Ӳкерчӗк çинче: Шупашкар станцин строительствинчи стольяр-стаханӑвец Хазип Шамгунович Шайхутдинӑв йулташ, нормӑна 200 проц. тултарса пырат.

Цыганов фото-ӳкерчӗкӗ.

Октабӗр уйавӗ умӗнхи ӑмӑрту

МАÇТӐРӐН ТИВӖÇЛӖ ӖÇӖ

Производствӑра рабочисене йаланах йӗркелӗ, пӗр чӗрмавсӑр ӗçлеме майсем туса парасси маçтӑртан нумай килет. Çакна кашни савӑтӑн, кашни цехӑн ӗçӗнче курма пулат. Акӑ, товарнӑй комбинат плана уйӑхран уйӑха тулта раймаст. Мӗншӗн тесен, кунта рабочисен ӗç вырӑнӗсене кирлӗ пек организацилемен, материал çитмест, ӗç дисциплини те сӳрӗк. Маçтӑрсем ӗçе çменӑ пуçланиччен 20—30 минут малтан пырса кирлӗ материалсене хатӗрлемеле. Вӗсем апла тумаççӗ. Ӗçе рабочисемпе пӗр вӑхӑтра пыраççӗ. Хӑшпӗр чухне ӗçе пырсан мӗн тумаллине те пӗлмеççӗ. Çавна пула ӗç 30—50 минут кайа йулса пуçланат.

Пирӗн тимӗрç цехӗ те чылай вӑхӑт хушши плана тултармарӗ. Халӗ ака цех кашни кунах плана ытлашшипех тултарса пырат. Мӗнле тунӑ-ха çакна? Цех руководствин чӑн малтанах производствӑри „кӑлтӑксене“ пӗтерчӗ, ӗç дисциплинине çирӗплетрӗ, ӗç вырӑнӗсене лайӑх организацилерӗ. Пӗр сӑмахпа каласан, производствӑ командирӗсем рабочисене валльи лайӑх ӗçлеме майсем туса пачӗç. Çакӑ вара рабочисен ӗçлес хастарлӑхне хӑпартрӗ.

Епӗ цехра аслӑ маçтӑр пулса ӗçлетӗп. Ку ответлӑ ӗç. Мӗнле ӗçлетӗп-ха епӗ? Цеха çменӑ пуçланас умӗн рабочисенчен малтан пыратӑп та пайан мӗн тумалине хатӗрлетӗп, рабочисен ӗç вырӑнне пӑхса тухатӑп. Кашни рабочи валли ӗç картӑчки пур. Учот ӗçӗ те лайӑх. Кашни кунах ӗç пӗтерчӗ хыççӑн рабочисене хӑйсем мӗнле ӗçлени, миçе тенкӗ ӗçлесе илни çинчен каласа паратӑп. Çапла ӗçлени цехра стаханӑвла йухӑма вӑйлатма пысӑк майсем пачӗ. Тимӗрçсем—Кукльайӗв, Миронӑв, Чернов йулташсем кулленхи нормӑна 300—500 процентшар тултарса 50—85 тенкӗшер ӗçлесе илеççӗ. Кун пек пысӑк тухӑçпа ӗçлекенсем сахал мар.

Тимӗрç цехӗ 9 уйӑх хушшинче 1840 тоннӑ продукци туса кӑларса плана ытлашшипех тултарчӗ. Куçса çӳрекен хӗрлӗ йалава илчӗ. Анчах цехри рабочисем кунпа лӑпланмаççӗ. Вӗсем татах та лайӑхрах ӗçлесшӗн. Халӗ, Октабӗр умӗнхи ӑмӑртӑва хутшӑннӑ май, кашни рабочи хӑй çине обйазательствӑ илчӗ. Цех Октабӗр уйавӗччен тата 300 тоннӑ поковка парса, çулталӑк планне тултарма пулчӗ. Епӗр хамӑр пек ӗçлеме товарнӑй комбината, урапа цехне тата механически цеха ӑмӑртӑва чӗнетпӗр.

Малыгин

Канашри вакунсем йусакан савӑтри тимӗрç цехӗнчи аслӑ маçтӑр.

Руда кӑларас плана ӑнӑçлӑн тултараççӗ

ВӐРНАР. „Ирӗр Ишак“ рудникӗн кӑçалхи производствӑлӑ çевонӗнче 33 пин тоннӑ фосфорит руди кӑлармала. Пайанхи куна 32052 тоннӑ руда кӑларса плана 97 процент тултарнӑ.

Рудникри рабочисем хушшинче социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑм саралсах пырат. Уйрӑмӑнах ӑмӑртура Осипӑв йулташ йертсе пыракан бригадӑ малта пырат. Вӑл чӑн-чӑнах стаханӑвла бригадӑ шутланса тӑрат. Бригадӑ членӗсем пурте кулленхи ӗç нормисене 245—250-шар процент тултарса ӗçлеççӗ. Çапла ӗçленӗрен те ӗнтӗ бригадӑ кашни уйӑхрах плана 245 процентран кайа мар тултарат. Степанӑв йулташ бригади те лайӑх ӗçлет, вӑл уйӑхри ӗç нормине 216 процент йе ытларах пурнӑçа кӗртет.

Рудникре ӗç нормине ытлашшипех тултарса ӗçлекен рабочисен хисепе ӳсленсех пырат. Хальхи вӑхӑтра 200 процентран кайа мар тултарса ӗçлекенсем 37 çын, 120—250 процент тултаракансем 16 çын шутланаççӗ.

Рудник ӑнӑçулӑ ӗçлеме пуçлани уйрӑмӑнах рабочисем валльи ӗçлеме лайӑх майсем туса панинчен килнӗ. Рабочисене кашнинех ӗç тумтирӗсем, инструментсем панӑ. Кашни забойщикӑн тимӗр кӗреçе, тиркӑ, лом пур. Пуҫӑ вӑхӑт та савӑнӑçлӑ, культурӑлӑ иртет. Хаçат-журналсем пулаççӗ, тӗнчери лару-тӑру çинчен калаçусем туса ирттереççӗ.

Кунта Алгаçӑн йалповӗн ларӑвкӗ ӗçлет. Ларӑвкра таварсем—çӑкӑр, сахӑр, махоркӑ, супӑнь, спичкӑ т. ыт. те çителӗклӗ пулаççӗ.

Рабочисем малашне социалисӑмлӑ ӑмӑртупа стаханӑвла йухӑма татах та вӑйлатса çулталӑк планне ӑнӑçлӑн тата срокчен тултарма пулаççӗ.

С. Николайӗв.

„Испанири граждӑн вӑрçин урокӗсем“

Германирен Франципе тарса кайнӑ антифашист, Германи тинӗс çар флотӗн офицерӗ пулнӑ Гельмут Клотц фашисла Германи çинчен çырса Парижра темиçе кӗнеке те кӑларнӑ. Йулашки вӑхӑтра вӑл „Испанири граждӑн вӑрçин урокӗсем“ йатлӑ кӗнеке кӑларнӑ. Ӑна пирӗн çар издательстви вырӑсла куçарса кӑларнӑ.

Кӗнекен пуçламӗш пайӗнче Испани çарӗ Бурбон монархийӗ пӗтес умӗн мӗнле пулни çинчен кӗске справкӑ илсе кӑтартнӑ. Ун чухне пӗр офицер пуçне 7 салтак тивнӗ. Офицерсен корпусне тытса тӑма укçа-тенкӗ питӗ нумай тухнӑ. Çавӑн пирки те Испани халӑхӗн пурнӑçӗ чухӑнланса пынӑ, çӗршыв йухӑнма пуçланӑ, çар ӗçӗ вӑйланма пултарайман.

Франко генерал пӑлхав пуçласан, офицерсем пурте пекех ун хыççӑн кайнӑ. 15 пин офицертан 200 офицер кӑна республикӑ йенче йулнӑ.

Автӑр республикӑ çарне тума Испани халӑхне мӗн пек йывӑр пулнине, çак çара тӑвассишӗн Испани халӑхӗ йепле çине тӑрса кӗрешнине кӑтартат.

Испанири ӗçсене анализ туса тухнӑ хыççӑн, автӑр çакӑн пек шухӑшсем патне пырса тухат: çар техники аталанса пыни, уйрӑмах—инçете хӑварттӑн перекен хӗçпӑшал техники малала кайни пурнӑчен ытла оборонӑ ӗçне вӑйлӑхлатат. Хальхи вӑхӑтра самолотсем, танксем нумай пулсан та, наступлени тума никӑçвнхиччен те ытларах йӑвӑр. Оборонӑ вӑхӑтӗнче самолотсемпе танксене хирӗç кӗрешмели вӑрçӑ хатӗрӗсен аталанӑвӗ самолотсемпе танксен аталанӑвӗнчен хӑвӑртрах пырат.

Республикӑлӑ Испании çурран çарӗ тӑвакан тӗлӗнмеле çӗнтерӳсем тӑрӑх, автӑр çурран çар хальхи вӑрçӑра та „вӑрçӑ хирӗн патши“ пулса йулат, тесе кӑтартат.

Испанире танксемпе усӑ курни çинче тата танксене хирӗç кӗрешмели вӑрçӑ хатӗрӗсем çинче тӗплӗн чарӑнса тӑрса автӑр, танксемпе наступлени тунӑ чухне те ӗçе татса паракан вӑй çурран çар пулнине кӑтартат. Танк, артиллери пекех, çурран çара пулӑшмали хатӗр кӑна. Нумай примерсемпе фактсем тӑрӑх, автӑр, сӑмах майӗн тата Германипе Итали çӑмӑл танкӗсем Испанире нимӗнех те тума пултарайманнине кӑтартса хӑварат. Пахалӑх йенчен илсен вӗсем, Испани çӑмӑл танкӗсенчен чылай начар. (Испанире тӑвакан çӑмӑл танксем пирӗн çӑмӑл танк йышшисем).

Нумайӑх та пулмаст, 1935 çулта кӑна, хӑшпӗр империалисла çӗршывсенчи çар çыннисем Германин çӑмӑл танкӗсем çине питех те пысӑк шанӑç хунӑ пулнӑ. Мадрид фронтӗнчи ӗçсем çакнашкал шухӑш тӗрӗс маррине кӑтартрӗç. „Германин бронетанк дивизисенче тӗп хӗçпӑшал пулса тӑракан танк,—тет автӑр,—унтан питӗ хӑрарӗç, ӑна ытлашши ӳстерсе мала хучӗç пулсан та, тӗрӗсемпе илсен, йурӑхсӑр хӗçпӑшалпа пӗрех пулчӗ. Франко генерал час-часах пӗчӗк çапӑçусенчех çавӑн пек танксене 70—100 таран çухатат. Чылай чухне,—нумай чухне тесен те йурат,—вӗсен çакнашкал танкӗсем, хӑйсене хирӗç пулеметсемпе, хӑш чухне тата пӑшалсемпе пеме пуçласанах паранӑ“.

Кӗнекен йулашки пайӗсенче автӑр Германипе Итали фашистӗсем республикӑран туртса илнӗ вырӑнсенче Англипе Франципе хирӗç стратегилӗ базӑсем тунипе тӑрӑшыш çине кӑларат. Автӑр Италипе Германи Испанири интервенцине мӗн 1926 çултӑн вӗрах хатӗрлеме пуçланине палӑртат. Фашисла агрессӑрсен малашнехи тӗллевӗ вӑл—Франципе Англи çине вӑрçӑпа тапӑнма хатӗрленесси пулат.

1926 çулта, Примо де-Ривера генерал диктатӑр пулнӑ чухне, Италипе килӗшӳ тунӑ. Вӑл килӗшӳ тӑрӑх, вӑрçӑ-мӗн тухас пулсан, Итали Балеар утравӗсем çинче çар базӑ туса тытса тӑма пултарнӑ. Испани хӑй йенчен, вӑрçӑ тухас-мӗн пулсан, хӑйӗн территорийӗ урлӑ Франци çарӗсене йамашкӑн чарма пулнӑ.

1931 çулта, Испанире монархи йӗркине сирпӗтсе пӑрахнӑ хыççӑн, çамрӑк республикӑ çак намӑссӑр догӑвӑра пӑрахӑçа кӑлармала тунӑ. Анчах 1934 çулта, Бурбонсен династине тепӗр хут çавӑрса илмелле тӑвассишӗн тӑракан Испани генералӗсем Римра каллех тепӗр хут Муссолинипе килӗшӳ тунӑ.

Çавӑн пекех тата кӗнекере Испани генералӗсемпе Муссолини курнӑçса калаçни çинчен çырнӑ протокола пичетлесе кӑларнӑ. „Дуче“ Испанири монархисла партисене пур майсемпе те республикӑна пӗтерес ӗçре пулӑшма пулнӑ. Муссолини çак ӗçе тума 200 пин винтовкӑ, 20 пин гранатӑ, 200 пулемет тӑратма тата Франко генерала 1,5 мӗлйун песет укçа парса тӑма килӗшнӗ. Ку сусиди малтанлӑха кӑна,—тенӗ Муссолини,—ӗççем лайӑх килсе тухнӑ тӑрӑх ӑна тата нумай ӳстерме пулат.

Тепӗр икӗ çултан, Испанире Франко генерал пӑлхав тапратса йарсан, самольот ӳксе вилнӗ чухне вилнӗ Санхурхо генерал çумӗнче (вӑл Муссолинипе курнӑçса калаçнӑ çӗрте пулнӑ) Испани, Итали тата Германи хушшинче килӗшӳ тума хатӗрленӗ пройект тупнӑ, вӑл пройект 1926 çулта тунӑ догӑвӑра тепӗр хут çӗнетет, пӑрахӑçа кӑларнӑ догӑвӑртан та чылай иртсе кайат.

Кӗнекере, çавӑн пекех тата, Италипе Германи 38 çул кайала, 1900 çулта Франципе хирӗç вӑрçа хатӗрленнине кӑтартакан документа пичетлесе кӑларнӑ.

„Испанири вӑрçа епӗр ытти çӗрти пек граждӑн вӑрçи вырӑнне хурса шутланипе ӑнӑш тума пултаратпӑр,—тет йулашкинчен автӑр. Ку сӑккунлӑ правительствӑ хӑйне хӳтӗлессишӗн, хӑйне çапла пех хӑварма тӑвассишӗн пыракан вӑрçӑ çеç мар. Испанири вӑрçӑ çакӑнтан та чылай пысӑкрах. Ку вӑл Йевропӑра пуçланас çӗнӗ вӑрçӑн малтанхи утӑмӗсем: ку вӑрçӑ, вӑрçӑ пуçласси çинчен пӗлтермесӗр пуçланнӑ.

Гитлӗрпа Муссолини Испанине туртса илесшӗн, мӗншӗн тесен вӗсем Франципе Йевропӑна хӗвеҫ алӑне çавӑрса илесшӗн“.

Республикӑлӑ Испанире

Ӳкерчӗк çинче: çамрӑксен пӗрлешӳлӗ союз членӗ—республикӑ çарӗнчи доброволӗц. (Союзфото).

Китайри вăрçă

Центр Китайра Жуйчан—Унин шоççе çулĕ патĕнче Китай çарĕсемпе вăрçнă чухне йапонĕçсен, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсен, пĕр пине йахăн салтак пĕтнĕ. 400 йапонĕçа тыткăна илнĕ.

Унин патĕнче китайĕçсем çав шоççе çулĕ тăрăх хĕвелтухăç йеннеле наступлени туса пыраççĕ. Вăл районра китайĕçсемпе вăрçнă чухне йапонĕçсен 3 пин салтак ытла вилнĕ.

Цзÿнзйан — Хаңкоу чукунçул линийĕ çинче те йапонĕçсене хыттăн аркатса тăкнă.

Цзÿнзйан — Наңчан чукунçул сывăхĕнче хайар çапăçусем Наңкан районĕнче пыраççĕ. Кунтан йапонĕçсем Махулин районĕнче вырнаçнă Китай çарĕсене сылтăм флангран пырса çĕмĕрме хăтланаççĕ.

Лучжоу—Сиңйан шоççе çулĕ çинче хайар çапăçусем Лошанрен кăнтăр йенчи районта пыраççĕ. Йапони çарĕсен малти позицисенче вăрçакан отрйачĕсем Бейпин—Хаңкоу чукунçулĕнчен 40 километрта тăраççĕ. Йапонĕçсем, китайĕçсем калама çук хыттăн хирĕç тăнине тĕл пулнă хыççăн тата пысăк çухатусем тунă хыççăн, Љуаң—Хошаң линийĕ тăрăх Ухаң çине наступлени тума пуçлана.

Ку районта Йапонин çĕнĕ подкрепленийĕсем çитнĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра октябĕрĕн 3-мĕшĕнче пăлхавçăсем, нумай самољотсем пулăшса пынипе, Сийерра Лаваљ де ла Торре районĕнче, Ебро йуханшывĕн çектăрĕнче республиканĕçсен позицисем çине атакă тунă. Пăлхавçăсем виçĕ высотана тытса илнĕ. Республикă çарĕсем фашиссен ытти атакисене йăлтах сирсе пăрахнă.

Сывлăшри çапăçура республикă истребителĕсем пăлхавçăсен темиçе самољотне персе антарнă. Миçе самољот персе антарнине палăртайман-ха, мĕншĕн тесен çапăçу пăлхавçăсен территорийĕ çийĕнче пит тĕтрелĕ çанталăкра пулса иртнĕ. Пăлхавçăсен пĕр самољочĕ республикă территорийĕ çине ÿкнĕ. Самољот çинчи пилот—итаљйанĕц пулнă, ăна тыткăна илнĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Мÿнхенри конференци хыççăн

Франци пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Германин пропагандă министерстви „Йевропăн нимĕçсем пурнакан пĕтĕм территорине" Германи аллине илес майпа вăйлă агитаци сарса йамали çинчен приказ панă. Çавăн пекех Германире „Йевропăн лингвистикăлă карти" текенскерне нумай тиражпа кăларнă. Çав картă çумне хушса кăларнинче, 88 мĕлйун нимĕçрен 75 мĕлйун кăна Германире пурăнаççĕ, 13 мĕлйун нимĕç ытти çĕршывсенче пурăнаççĕ, тесе çырнă.

Картă çине нимĕçсем пурнакан çĕршывсен шутне çаксене кĕртнĕ: Ељзас—Лотарингийа, Пољшăн, Литван, Чехословакин, Венгрин, Йугославин, Италин тата Швейцарин чылай пайĕсене.

(ТАСС).

Финанс агĕнчĕсен ăмăртăвĕ

ЙЕЛЧĔК. Çентябĕрĕн 29-мĕшĕнче районри финанс пайĕнче налог агĕнчĕсемпе инспектăрĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура Октябĕр революци 21 çул тултарас умĕнхи социалисăмлă ăмăртăва пуçарса йарасси çинчен сÿтсе-йаврĕç.

Канашлăва налог агĕнчĕсем нумайĕшĕ хăйсен квартăлти финанс планне тултарса килчĕç. Вăрăм Хăва йалсоветĕнче (налог агĕнчĕ—Шчербаков), Чăваш Каркалар (налог агĕнчĕ—Волкăв), Тăрăм (Кириллăв), Хăвăл Çырма (Григорйĕв) йалсоветсем финанс планĕсене тултарнă.

Çав вăхăтрах канашлура III-мĕш квартăл финанс планне питĕ та йапăх тултарнине палăртрĕç. Çĕнĕ Тĕмер (налог агĕнчĕ Васильйĕв), Тайапа Ентри (налог агĕнчĕ—Чумаков), Йелчĕк (налог агенчĕ—Захарăв) йалсоветсем йапăх ĕçленĕ.

Ку ыйтăва сÿтсе-йавнă чухне кашни налог агĕнчĕ хăйсем пĕрпĕрин хушшинче тунă социалисăмлă ăмăрту договăрне тепĕр хут лайăх тĕрĕслесе тухса, ĕç анăçлăхне ÿстересси çинчен чарăнса тăчĕç.

Канашлу IV-мĕш квартăл финанс планне Октябĕр революци пулни 21 çул тултарнă тĕле 75 процентран кайа мар, декабĕрĕн 20-мĕш тĕлне 100 процентчĕпех тултармала, тесе йышăнса хăварчĕ.

Й. Воробйов.

Пушар дружини начаљникĕсен канашлăвĕ

ИШЛЕЙ. Çентябĕрĕн 25 мĕшĕнче колхозсенчи пушарпа кĕрешекен ирĕклĕ дружинă начаљникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура вырăнсенчен килнĕ дружинă начаљникĕсем пушарпа кĕрешес, пушартан сыхланас ĕçсене мĕнле йĕркелени çинчен тухса каларĕç. Тухса калакансем уйрăмăнах райĕçтăвком тата машинă-трактăрлă станци пушартан сыхланас ĕççене йапăх туса пынине палăртрĕç. Акă райĕçтăвком çурчĕ умĕнче 500-шер витре шыв кĕрекен 3 чан туса лартнă, вĕсенчен пĕр чанĕ çинче çĕç çур чан таран шыв тытаççĕ, ыттисем пушах.

Машинă-трактăрлă станци сахал мар çуртсем лартнă. Халĕ те çĕнĕрен çуртсем нумай лартаț. Çапла пулсан та кунта пушартан сыхланас ĕçе кирлĕ пек туса пымаççĕ. Çуртсем патне шыв лартма тесе 13 пичке илсе хатĕрленĕ, анчах вăл пичкесем çине халĕ те шыв лартман. Кунта пушара хирĕç кĕрешмели ытти хатĕрсем те çителĕксĕр.

Канашлу йулашкинчен, колхозсенче те пушартан сыхланас ĕç йапăх тăнине палăртрĕ. Çак кунсенчех пур колхозсенче те пушарпа кĕрешмели хатĕрсене йĕркелĕ тытма, çурт-йĕрсем патĕнче çителĕклĕ таран шыв тытма, социалисăмлă пурлăха—колхоз, кооперации пурлăхне сыхлас ĕçе чи шанчăклă çынсене кăна лартма йышăнса хăварчĕ.

Г. Çутруков.

Пошанарти артиссем

Пошанар йалĕнчи (Йетĕрне р.) драмкружока 1930 çулта организациленĕ. 18 çынлă кружока Токăрĕв колхозник йертсе пыраț. Драмкружок хăйĕн спектаклĕсене питĕ лайăх, суфљорсăрах выљаса параț.

Кружок кăçал, Пĕтĕм Сойузри йалхуçалăх выставкине хатĕрленнĕ май, „Кушар" пйесăна выљама хатĕрленчĕ. Ку пйесăна Йетĕрне хулине кайса лартса панă. Курма 350 çынна йахăн пынă. Кружок хăйĕн ĕçне вăйлатма ку постановкăна укçала лартнă. Йетĕрнере лартнă постановкăсенчен 200 тенке йахăн укçа пухнă.

Кружок членĕсем хăйсен пултарулăхне çулран çул ÿстереççĕ. Çакна кура Йетĕрнери колхоз театрĕ Пошанарти драмкружокран аван выљакан членсене: Романăва, Башмакова, Григорйĕва тата Кондратйĕвăна хăй патне ĕçлеме чĕнсе илчĕ.

Халĕ драмкружока çĕнĕ членсем хутшăнаççĕ. Кружок комсомолăн 20 çулхи уйавне тимлесех хатĕрленет.

Н. Амурцĕв.

Пйесăсен конкурсĕ пĕтнĕ

Чăваш АССР Искусствă ĕçĕсен комитечĕ туса иртернĕ лайăх пйесăсен республикăри конкурс срукĕ пĕтнĕ. Конкурса пурĕ 27 пйесă килнĕ. Автăрсем вăл пйесăсенче пуринчен ытла колхозри пурнăça кăтартса çыраççĕ.

Конкурса килнĕ пйесăсенчен икĕ пйесăна халех пичете пама йышăннă. Вăл—чăвашсен паллă драматургĕн П. Н. Осипăвăн „Пăлхав" йатлă пйеси („Сунтал" журналра пичетленет) тата çамрăк драматургăн М. Беловăн „Утарта" йатлă комеди („Капкăнра" пичетленет).

Çитес кунсенче конкурсăн жÿриларăвĕ пулаț. Унта конкурса тăратнă пйесăсенĕ пăхса тухса, мĕнле пйесăсене премилес ыйтăва татса параççĕ.

Филармони бригадин гастролĕсем

Çак кунсенче Чăвашсен государствă филармонин бригади (руководителĕ Д. Петров) Тутаркас районĕн центрĕнче—Мăн Сĕнтĕрте пулчĕ. Бригадăри И. Ориниинский артист тĕрлĕрен цирк номĕрĕсене кăтартрĕ. Унăн выступленийĕсене курма пынисем пысăк интереспа пăхрĕç. Петров артист çĕнĕ йурăсем йурласа пачĕ.

Бригадă Мăн Сĕнтĕрте икĕ кун пулчĕ. Икĕ кун хушшинче выступленисене пурĕ 950 çын пăхнă.

Филармони бригади Тутаркас районĕнчен Йетĕрне районне тухса кайрĕ.

М. Исайĕв.

Чукунçула туса пĕтерессипайан тумали ĕç

Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçула туса пĕтерсе вăхăтлăх експлоатацине парас тĕлĕшпе пуçланнă стаханăвла çирĕмкунлăх иртрĕ. Строитĕлстварă ĕçлекен рабочисемпе колхозниксем стаханăвла çирĕмкунлăха хутшăнса ĕçлесе сахал мар паха тĕслĕхсем кăтартрĕç. Пĕрремĕш участкăри каменщиксем Кузнецов, Цветков, иккĕмĕш участкăра—Лавренăв Царйов, виççĕмĕш участкăра—Зайцев, Рубцовă йулташсем йертсе пыракан тата ытти нумай бригадăсем икшер нормă тултарса пычĕç. Стаханăвĕçсемпе ударниксен ретне çĕршер рабочисем, колхозниксем тăчĕç.

Стаханăвла çирĕмкунлăх хушшинче август уйăхĕнче тунă ĕçсенчен 104 пин тенкĕлĕх ытла (пĕтĕмпе 704.300 тенкĕлĕх) ĕçсем тунă. Апла пулсан та строитĕлствă планне тултарасси çаплах кайа йулса пыраț. Октябĕрĕн 1-мĕш тĕлне çулталăкри плана 66,2 процент çеç тултарнă. Чукунçула октябĕрĕн 1-мĕш тĕлне туса пĕтерсе вăхăтлăх експлоатацине памала тăвассине стаханăвла çирĕмкунлăхра та пурнăça кĕртсе çитермен.

Чукунçула туса пĕтересси вăрăма йулнине нимĕнле сăлтавпа та каçарма çук. Строитĕлсен чукунçула вăхăтлăх експлоатацине октябĕрĕн 1-мĕшĕнче памала тума мĕн кирлисем пурте пулнă. Материаллă-техникăлă хатĕрсем, машинсем çителĕклĕ. Пысăк тухăçлăхпа, пахалăхпа ĕçлеме пултаракан кадрсем те пур. Анчах чукунçул строитĕлствин руководителĕсем вăл условисемпе усă курман. Халĕ вĕсем хăйсем ĕçе бољшевикла тимлĕхпе организацилеменнине тĕрлĕ сăлтавсемпе тÿрре кăларма пикенеççĕ.

Çавăн пек пĕрремĕш участкă начаљникĕ Розавăв йулташ участкă начар ĕçленине ĕç вăйĕ çителĕксĕр пулни çине йăвантараț. Çав вăхăтрах унта колхозсенчен пыракан ĕç вăйĕпе туллин усă курмаççĕ. Стаханăвла çирĕмкунлăх хушшинче Шупашкар районĕнчи „Кукшум" колхозран пынă колхозниксем ĕçлемесĕр чылай вăхăт иртернĕ. Ĕçлеме пыракансене тивĕçлĕн йышăнса илсе, ĕçлеме условисем туса паман пирки кайала кайнисем те сахал пулман.

Чукунçул строитĕлствинчи партипе профсойуз организацисем, çавнашкалах управлени начаљникĕ Вавилкин й. работниксем хушшинче ответсăрлăха пĕтересси тата ĕçре çирĕп йĕрке тăвасси çинчен никĕ çула йахăн ĕнтĕ калаçаççĕ. Калаçни калаçнипех йулаț-ха. Работниксем хушшинче ĕç çине сăмаллăн пăхас çĕрĕк йăлана хирĕç кĕрешни çук. Стройкăри дезорганизатăрсене хирĕç хайаррăн кĕрешсе пырас вырăнне, Вавилкин й. хăй вĕсене пулăшаț. Çуртйĕрсем тăвакан участкă начаљникĕ Батков бригадăсене салатса йани, вăл ĕçкĕ-çикĕпе иртĕнсе çÿрени çинчен сигналсем сахал пулман. Анчах Вавилкин Баткова никампа та улăштарма май çук çын вырăнне хурса, строитĕлстварă тытса усраț.

Строитĕлстварă пулнă халăх тăшманĕсем, сăтăрçăсем пур майсемпе те строитĕлствă ĕçне вăрăма чăсма тăрăшнă. Халĕ вĕсене уçса палăртса çĕмĕрсе тăкнă. Анчах сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе палăрмалăх ĕçсем туни курăнмаст. Строитĕлстварă пытанса йулнă шанчăксăр елементсене тасатас тĕлĕшпе те бољшевикла çивĕчлĕхпе ĕçлемеççĕ.

Чукунçул тăвасси—пĕтĕм республикă ĕçĕ. Çакна чылай районсенчи партипе совет органĕсем тивĕçлĕн йланса илмен. Ĕç вăйĕ организацилесси стаханăвла çирĕмкунлăх хушшинче те малтанхи пекех начар пынă. Куллен 4 пин çын ĕçлес вырăнне, 1500 çынна йахăн çеç ĕçленĕ. Вăрмар, Тутаркас, Канаш районĕсем ĕç вăйĕ организацилес пирки Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсем Совечĕ йышăннă постановленине пурнăçа кĕртсе пымаççĕ.

Республикă чукунçула халех вăхăтлăх експлоатацине парассине кĕтет. Строитĕлствăри партипе профсойуз организацисен, руководителĕсен, инженерлă-техникăлă работниксен пĕтĕм вăйа хурса, чукунçул строитĕлствине хăвăртрах вĕçлесе çитерме татăклă ĕçсем тумала. Апла тума ответлăха туйса ĕçлани, пĕтĕм ĕçе çирĕп график тăрăх туни кирлĕ.

Чукунçула çак кунсенчех вăхăтлăх експлоатацине парассишĕн строитĕлсемпе пĕр танах партипе совет организацисем те ответлă. ПСК(б) Парти райкомĕсен, райĕçтăвкомсен строитĕлстварă ĕçлеме кирлĕ чухлĕ ĕç вăйĕ организацилемеле. Ĕçлеме пыракансем хушшинче политикăлă-массăлă ĕçе вăйлатнă никĕс çинче социалисăмлă ăмăртупа стаханăвла йухăма çĕклесех пырса, пĕтĕм ĕçе стаханăвла хăвăртлăхпа тумала организацилес пулаț.

Апат-çимĕç промышлĕннăçĕнчи çĕнĕ предприйатисем

Кăçалхи çул апат-çимĕç промышлĕннăçĕ нумай çĕнĕ пысăк предприйатисемпе пуйанланчĕ. Семипалатинскри аш-какай комбиначĕ çумĕнче консервсем тăвакан цех ĕçлеме пуçланă. Çулталăкне вăл 50 мĕлйун банкă консервă туса кăлармала. Иркутскра пĕр çменăра 13 тоннă кăлбаси хатĕрлекен цех стройа кĕнĕ.

Çĕнĕ çăкăр савăчĕсем Ленинградра (çменăра 100 тоннă çăкăр пĕçерет), Ворошилăвградра (60 тоннă), Брйанскра тата Сталинабадра ĕçлеме тытăннă.

Рогачевăра (Белоруççи) çăра сĕт савăтне експлоатацине панă. Вăл савăт кашни çул 5 мĕлйун банкă çăра сĕт туса кăлармала. Совет гавăнĕнче (Инçет-Хĕвелтухăç) пулă консервисем тăвакан савăт, Кирăвск облăçĕнче спирт савăчĕ тата Мускавра, Читара, Хабаровскра, Ивавăвăра темиçе холодиљник ĕçлеме тытăннă. Çывăх вăхăтра Шпољанскри (Украинă) сахăр савăчĕ ĕçлеме пуçăнаț.

СУД

Татăлнă ĕмĕтсем

С. Морозăв Тутаркас районĕнчи уполнаркомзагра учотчик пулса ĕçлеме тытăнсан малтанхи кунсенех, вăл хăйне ваљљи питĕ лайăх, тухăçлă вырăн тупнăшăн хĕпĕртесе ÿкнĕ. Кунта ĕнтĕ еп укçасăр аптăрас çук, самăй укçа çапмали вырăн кунта, тенĕ вăл.

Пуçланаççĕ вара учотчик Морозăвăн укçа „çапмали" операцисем. Хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса, вăл йалти ĕççынисенчен: „сирĕншĕн государствăна хамах аш-какай тÿлетĕп" тесе, тата „ан хыпаланăр, хамах майлаштарса паратăп" тесе, вĕсенчен хăйне ваљљи 100-шер, тепĕр чух 150-шар тенкĕ укçа илнĕ. Çакăн хыççăн вара вăл укçа илнĕ çынсен государствăна аш-какай памали обйазатĕлствисем çине: „аш-какай пана" тесе килограмсемпе кăтартса çырса лартнă.

Ĕмĕтсем ун пысăк пулнă. Çакăн пек „техникăпа" укçа ытларах пуçтарса, вăл çитес çулла Крымпа Кавказра курса çÿреме те план тунă пулнă. Хусана кайса пин тенкĕ тăракан сăран паљто та илме шухăшланă. Район центрĕнче мотоциклетсемпе йарăнса çÿрекен çынсенчен йулас мар тесе, вăл çитес кунсенче мотоциклет илме кооперацине заказ та пама палла туса хунăччĕ.

Анчах... унăн çутă ĕмĕчĕсем тĕксĕмленсе кайса ĕмĕтсемпех йулчĕç. Крымпа Кавказа кайасси те пулмарĕ, сăран паљто тăхăнса Мăн Сĕнтĕр урамĕсем тăрăх, хаклă йышши пирус хыпса, мăнкăмăллăн утса çÿреме те тÿрĕ килмерĕ, райпотребсойуз председателĕпе Сталĕв йулташпа мотоциклет заказĕ пирки калаçни те ахалех пулчĕ.

Морозăвăн жуликла ĕçĕсем тăрă шыв çине тухнă. „Шилăна михĕ ăшĕнче пытарма çук" тенĕ пек, ку жулик та хăйĕн айăпла хăтланăвĕсене пытарса хăварма пултараймарĕ.

Вçаткă илнĕ çынсене вăл кашнинех: „асту, мана укçа пани çинчен никама та каласа панă ан пултăр, çак ĕç вăл питĕ çекретлă", тесе хытах калана пулсан та, такамăн „чарусăр" чĕлхи çакăн çинчен калана та панă. Аш-какай обйазатĕлстви çине пурĕ те икĕ кĕске сăмах: „какайне тÿленĕ" тесе çырнăшăн Морозăвăн тарăн кĕсйишĕн 150 тенкĕ виçĕ хут укçа пани çинчен те çав çын чăннипе каласа панă.

— Ахаљ каçармала мар ун пек жуликсене, суда парса хытăрах айăплас пулаț вĕсене,—тенĕ вăл йулашкинчен, районри милици управленин алăкĕнчен тухса кайнă чухне.

Мăн Сĕнтĕрте, уполкомзакра темле майпа учотчик пулса ĕçленĕ Морозăв жуликĕн айăплă ĕçĕсем ахаљ йулас çук. Вăл ĕççене тĕпчесе пĕлме пуçланă ĕнтĕ. Морозăвăн икĕ сăмахлă резољуцисемлĕ темиçе аш-какай обйазатĕлствисене те тупса палăртнă ĕнтĕ. Тулли мар хисеп тăрăх, вăл 500 ытла килограм аш-какайшăн укçасем илнĕ.

Морозăва халĕ арĕсленĕ. Çак кунсенче ăна суд тумала.

Ив. Кашасем.

Илмен тăвĕсен пуйанлăхĕсем

Кăнтăр Уралăн хĕвелтухăç йенчи сĕвекĕ çинче Илмен тăвĕсен çулĕ мар речĕ тăсăлса выртаț. Ку вăл—Урал çутçанталăкĕн тĕлĕнмеле илемлĕ кĕтесĕ. Йĕм-йешĕл хырчăрăш вăрмынĕсемпе витĕннĕ сăртлă çулĕ вырăнсем илемлĕ айлăмсемпе улмашăнса пыраççĕ, вĕсем тăрăх пĕчĕк шывсем, шыв йуххисен сивĕ те тăп-тăрă шывĕсем йухса выртаççĕ. Пысăк та тарăн лакăмсенче—нумай-нумай кÿлĕсем, вĕсем хăйсем тĕллĕн çуталакан хаклă йышши чулсем пек тÿлекĕн йăлтăртатса выртаççĕ. Кÿлĕсен хĕрринче хăватлă хырсем пĕрне-пĕри тăвăрласа лараççĕ.

Илмен тăвĕсен вăрманĕсемпе кÿллисем пит те пуйан. Анчах вĕсен тăприсем айĕнче пытанса выртакан минералсем тата хаклăрах. Тахçан ĕлĕк, çĕр пурнăçĕн авалхи тапхăрĕсенче, çав пуйанлăхсем унта, тусен çийĕсем çинче, пит пысăк геологилĕ процессем пулса иртнĕ хыççăн пулса пухăнса йулнă.

Илмен тăвĕсем ĕлĕкренпех çынсене хăйсем патнеле туртнă.

XVIII-мĕш ĕмĕрте илменри хаклă чулсем нимĕç купци алли урлă тĕнчери музейсене сарăлнă.

Чаплă тусем патне учонăйсем вырăç учонăйĕсем те, урăх çĕршывсенчисем те час та час пыма пуçланă. Вĕсем сайра тĕл пулакан минералсем пухăнса выртакан вырăнсене сăнаса вĕреннĕ, çĕнĕ вырăнсем шыра-шыра тупнă. Вĕсем çав вăхăтрах тата çакна курнă: çутçанталăк туса хунă çак минералоги музейне тустарнă, саратнă. Ăслăлăхсен академийĕ ăслăлăх пуйанлăхне çаратассине чарса лартас ĕмĕтпе патша правителствин органĕсем умĕнче ходатайствă кăларса тăратнă. Анчах унтан нимĕнле усă та пулман.

Учонăйсен ĕмĕтне — Илменри пуйанлăхсене сыхласа усрассине—совет влаçĕ çеç пурнăçа кĕртрĕ. 1920 çулта Илмен тăвĕсене государствă минералоги заповедникĕ туса хуни çинчен калакан декрет тухнă, вăл декрета Ленин алă пусса кăларнă. Чулсен заповедникĕ халљхи вăхăтра та çавă çеç, ун пек йапала тĕнчере урăх çук.

Кăнтăр Урал çулĕ çинчи Миасс станцийĕ йунашар калама çук чаплă Илмен кÿлли сарăлса выртаț. Унăн çыранĕ патĕнче, ту сĕвекĕ çинче хаваслă йăвăç пÿртсем курăнаççĕ. Ку вăл—Илменри минералоги заповедникĕн ăслăлăх станцийĕ.

Унта кунсеренех турисен ушкăнĕсем карталанса тăсăлса пыраççĕ. Вĕсем Совет Сойуҙĕн пур кĕтесĕсенчен те пыраççĕ: Самаркандпа Ленинградран, Омскпа Астрахањрен, Мускавпа Чељабинскран.

Илменри пуйанлăха икĕ хутчен, 1897-тата 1937 çулсенче, пĕтĕм тĕнчери геологсен конгресĕсен членĕсем пырса курнă. Илмен тăвĕсен чаплă пуйанлăхĕсене курса тĕнчери учонăйсем савăнса тĕленнĕ.

Заповедник музейĕнче, витринăсемпе сĕтелсем çинче—чи тĕрлĕ тĕслĕ те тĕрлĕ формăлă минералсем. Куççулĕ пек тăрă, витĕр курăнакан кварц, сарăрах бериллăсем, ылтăн тĕслĕ хĕвел чулĕсем, чукун пек хура илменит друзисем, кĕмĕл пек те тĕтрелĕ тĕслĕ уйăх чулĕсем, симĕсрех тĕслĕ апатит тата ытти çĕршер тĕслĕ чулсем.

Нумай чулсене калама çук илемлĕ кĕтессемлĕ туса йакатса хунă. Заповедник гранилщикĕ Николай Федăрăвич Медведĕв вĕсене тĕлĕнмеле тĕссемпе йăлтăртатса çуталакан туса хунă.

Заповедник йышăнса тăракан лаптăк—42 пин гектар. Вĕсенчен виçĕ пайĕнчен ик пайĕ вăрманта витĕнсе тăраț, кÿлĕсем 5000 гектар йышăнса тăраççĕ, çавăн чухлех улăхсем.

— Илмен тăвĕсен пĕтĕм уйрăмлăхĕ çакăнта, — тет заповедник директăрĕ Г. П. Корнилăв,—кунта, пысăк мар участкă çинче, çутçанталăк çав тери нумай минералсене пит килĕшÿлĕ пухса хунă, чăнах та çĕр çинче çакăн йевĕрлĕ тепĕр кĕтес шыраса тупма та çук. Кунта халех те 97 тĕслĕ тĕрлĕрен минерал тупнă. Вĕсенчен 28-шĕ çĕр çинче ытла та питĕ сайра тĕл пулаççĕ. Менделейĕв таблицийĕнчи 92 елементран 64 елементне заповедникре тупнă та ĕнтĕ. Илмен тăвĕсем татах та нумай çĕнĕ йапаласем пĕрçĕ-ха, ун пирки иккĕленмели çук.

Заповедник шахтисем тăрăх пĕрремĕш хут екскурçи туса тухсанах, унăн пуйанлăхĕ ниçĕлми иккене курса ĕненетĕн.

Сукмак пĕр çÿлеле çĕклесе, йе сĕвекпе аялала анса, пĕр шахтă патенчен теприн патне илсе пыраț. Вĕсем пысăк мар. Вĕсем—5—15 метр тăрăшшĕ, 4—7 метр таранĕш шăтăксем. Кашни çавăн пек шăтăках çĕнĕрен те çĕнĕ чулсен—тĕрлĕ тĕслĕ формăлă, халиччен курман чулсен ушкăнĕсем уçса параț. Акă тĕссĕр кăвакрах чул муклашки çинче пĕверленсе ларнă йун татăкĕ пек гранат кристалĕ курăнаț, кунта тĕтĕм тĕслĕ кварц сийĕ йăлтăртататț. Тепĕр шăтăкĕнче çурхи шевкер таса пĕлĕт тĕслĕ амазонски чулсем, тата кăшт леререх—хура сљуда сутипе куç йăмăхса кайаț.

Кашни шăтăкрах—тĕрлĕрен металлсен коллекцийĕ. 50-мĕш, Блумăвски шăтăкра, 18 тĕслĕ минерал. Ку вăл—уйрăмах мухтавласкер, мĕншĕн тесен унта радиоактивлă минералсем—самарскит, аннеродит тупнă пулнă. Вăл шăтăка ансан, хăвна ху сăрт-ту пуйанлăхĕсен йумахри пек чаплă кĕтесĕнче тăнă пек туйатăн.

Заповедникĕн çак пĕтĕм пуйанлăхне хастарлă совет геологĕсем сыхласа усраççĕ, вĕсене сăнаса вĕренеççĕ.

Заповедникри ту станцин начаљникĕ Симонов йулташ титаллă минералсен ушкăнĕ çинчен ăслăлăхлă пысăк ĕç хатĕрлет, минералог Устинăвă йулташ пысăк ĕç туса пĕтерет, вăл пĕтĕм шăтăксем мĕнне çырса кăтартаț; вĕсем заповедникре 200 ытла.

Илмен тăвĕсем совет çĕршывне татах нумай çĕнĕ йапаласем парасса заповедник работникĕсем шанса тăраççĕ. Кăçалхи çул кăна заповедникра çĕрсем ăшĕнче çак йапаласем пуçласа тупăннă: осмистый иридий, хĕвел чулĕ, платинă, хромлă магнетит (унта хромпа никĕл нумай).

Илменре кашни çулах вуншар студентсене—практикăна пынă, пулас геологсемпе минералогсене курма пулаț.

Илмен заповедникĕ минералсемпе кăна мар пуйан. Унта 210 тĕслĕ кайăк-кĕшĕк пурăнаț, косуљасем, мулкачсем, тилĕсем, вакшасем, барсуксем тата ытти нумай чĕр-чунсем пурăнаççĕ. Нумайăх пулмаст заповедник çĕнĕ чĕр-чунсемпе пуйанланчĕ. Унта Инçет-Хĕвелтухăçĕнчен, унти çанталăка хăнăхтарма, чăпар пăлансем 25 пуç илсе пынă, вăл пăлансен майракисенчен пурне те паллă пантсем туса кăлараççĕ. Вĕсем заповедникре пит ăнăçлăн пурăнма пуçланă, пĕрремĕш хут пăрулана та ĕнтĕ.

Заповедникри биологсем, зоологсем, геоботаниксем тата вăрман ĕрчетекенсем Илмен тăвĕсем çинчи çак пĕтĕм выљăх-чĕрлĕхсен, кайăк-кĕшĕксен тĕнчине, ÿсен-тăрансене, кÿлĕсене сыхласа усраççĕ тата сăнаса вĕренеççĕ. Вĕсем, Илмен тăвĕсен çĕр айĕнчи пуйанлăхĕсене сăнаса вĕренекен минералогсем пекех, пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Минералоги заповедникĕ халех те ĕнтĕ комплекслă заповедник пулса пыраț.

С. Ламкин.

Илмен заповедникĕ, 1938 ç. сентябĕр.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

Шупашкарти „Пекарь" артеле йалан ĕçлеме

БУХГАЛТĔРСЕМ КИРЛĔ.

Ĕç вăхăтĕнче çак адреспе ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, улица Чернышевского дом № 6.

ПРАВЛЕНИ.

„РОССНАБСБЫТĂН" ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКĔНЧИ УЙРĂМНЕ

економист-финансист, економист-статистик

ТАТА

ученик-статистик

ВАСКАВЛА КИРЛЕ.

2—1

ШУПАШКАРТИ

Ленин йачĕпе тăракан артеле

[illegible]

КИРЛĔ.

Адрес: г. Чебоксары, Красная площадь, магазин Промкооторга, верхний этаж, ход со двора.

ПРАВЛЕНИ

3—2

„Чăваш Коммунĕ" [illegible] уйăха 5 р. 50 п. [illegible] 18 т. [illegible]

Уполномоченный Чувашглавлита № 522 Гор. Чебоксары, типография № 1 Местпрома ЧАССР, заказ № 703.ф. 6. 58 Х 84 п. л.